Книж. пал

24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ФЕВРАЛЬ
25
ЮНКУН
47 (6072) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Оборона Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

1942 çулти февралĕн 23-мĕш. № 55. Мускав хули

Юлташсем — красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем!

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине пирĕн çĕршыври халăхсем хамăрăн тăван çĕршывăн пурнăçĕпе ирĕклĕхĕ çине сĕмсĕррĕн те ултавлăн тапăннă фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçăн хаяр кунĕсенче кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсем, хамăрăн çĕршывран нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хăваласа кăларас тата хамăрăн тăван çĕршывăн чыслăхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварас тесе, Çурçĕрти Пăрлă океанран пуçласа Хура тинĕс патне çити сарăлса выртакан питех те вăрăм фронт тăршшĕпех хаяр çапăçусем туса пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн пирĕн тăван çĕршыва ун çине тăшмансем тапăннинчен пĕрремĕш хут мар сыхлама тивет. Хĕрлĕ Çара 24 çул ĕлĕкрех, пирĕн çĕршыва пайăн-пайăн ваклама тата унăн никама пăхăнманлăхне пĕтерсе тăкма тăрăшнă ютçĕршыв интервенчĕсен-захватчикĕсен войскисене хирĕç кĕрешме тунă. Хĕрлĕ Çарăн çамрăк отрячĕсем, çапăçăва малтанхи хут пырса кĕнĕскерсем, 1918 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче Псковпа Нарва патĕнче нимĕç захватчикĕсене тĕппипех аркатса тăкрĕç. Шăпах çавăнпа ĕнтĕ 1918 çулти февралĕн 23-мĕш кунне Хĕрлĕ Çар çуралнă кун тесе пĕлтернĕ. Çав вăхăтран пуçласа Хĕрлĕ Çар ютçĕршыв интервенчĕсене-захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре ÿссе тата çирĕпленсе пычĕ. Вăл 1918 çулта нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçса пирĕн тăван çĕршыва сыхласа хăварчĕ, Украинăпа Белоруссие çĕрĕ çинчен захватчиксене хăваласа кăларчĕ. Вăл 1919—1921 çулсенче Антанта войскисене хирĕç çапăçса пирĕн тăван çĕршыва сыхласа хăварчĕ, çав войскăсене хамăрăн çĕршывран хăваласа кăларчĕ.

Граждăн вăрçи вăхăтĕнче ютçĕршыв интервенчĕсене-захватчиксене çĕмĕрсе тăкни Совет Союзĕнчи халăхсене нумай вăхăтлăха мир туса пачĕ тата мирлĕ строительствăра ĕçлеме май пачĕ. Мирлĕ строительствăн çак çирĕм çулĕ хушшинче пирĕн çĕршывра социализмлă промышленность тата колхозлă ялхуçалăхĕ пулса тăчĕ, наукăпа культура ÿссе чечекленчĕç, пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ çирĕпленчĕ. Анчах та тăшмансем пирĕн çĕршыв çине сĕнĕрен килсе тапăнма пултарассине совет халăхĕ нихăçан та манман. Çавăнпа та промышленноçпа ялхуçалăх тата наукăпа культура ÿссе пынипе пĕр вăхăтрах Совет Союзĕн çар тĕлĕшĕнчи вăй-хăвачĕ те ÿссе пычĕ. Çак вăй-хăвата ĕнтĕ ют çĕрсене юратакансенчен хăшпĕрисем хăйсен çурăмĕ çинче тÿссе курчĕç. Çак вăйхăвата халĕ нимĕçсен мухтаса пĕтерне фашистла çарĕ тÿссе курать.

8 уйăх каярах фашистла Германи пирĕн çĕршыв çине вăрă-хурахла тапăнчĕ, пĕр-пĕрин çине тапăнмалла марри çинчен тунă договора сĕмсĕррĕн те ултавлăн пăсрĕ. Хĕрлĕ Çара пĕрре пырса çапнă хыççăнах вăл арканса кайĕ тата хирĕç тăма пултараймĕ, тесе шутланă тăшман. Анчах тăшман питĕ пысăк йăнăш турĕ. Вăл Хĕрлĕ Çарăн вăйĕсене шута илмен, совет тылĕн çирĕплĕхне шута илмен, пирĕн çĕршыври халăхсем çĕнтерÿшĕн кĕрешме хатĕр тăнине шута илмен, фашистла Германин Европăри тылĕ шанчăксăррине шута илмен, вăл, юлашкинчен, фашистла Германипе унăн çарĕн шалти вăйсăрлăхĕсене шута илмен.

Вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче, нимĕç фашисчĕсем кĕтмен çĕртен тата сасартăк тапăннине пула, Хĕрлĕ Çарăн ирĕксĕрех чакмалла пулчĕ, совет территорийĕн пĕр пайне хăварса тухмалла пулчĕ. Анчах та чакнă чухне вăл тăшманăн вăйне хавшатса пынă, ăна хаяррăн пырапыра çапнă. Хĕрлĕ Çарăн боецĕсем те, пирĕн çĕршыври халăхсем те пирĕн çар вăхăтлăха çеç каялла чакни пирки, тăшмана тытса чарасси пирки, унтан вара ăна аркатса тăкасси пирки нимĕн чухлĕ те иккĕленмен.

Вăрçă пынă вăхăтра Хĕрлĕ Çара çĕнĕ вăйсем кĕрсе хутшăнса пычĕç, сынсем тата техника хутшăнса пычĕ, резервран çĕнĕ дивизисем кĕрсе пулăшса пычĕç. Вара çавтери пысăк фронтăн тĕп участокĕсенче Хĕрлĕ Çар наступлени пуçласа ярас вăхăт килсе çитрĕ. Кĕске вăхăтрах Хĕрлĕ Çар нимĕçсен фашистла войскисене Дон çинчи Ростовпа Тихвин патĕнче, Крымра тата Мускав патĕнче умлă-хыçлăнах вăйлăн пыра-пыра çапрĕ. Совет столицине хупăрласа илессипе хăратакан нимĕçсен фашистла войскисене Мускав патĕнчи хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ Çар аркатса тăкрĕ. Хĕрлĕ Çар тăшмана Мускав патĕнчен хăваласа ячĕ, халĕ ăна хĕвеланăç еннелле малалла хĕссе пырать. Мускав тата Тула облаçĕсене нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă, тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ ытти облаçсенчи вуншар хуласемпе çĕршер ялсене ирĕке кăларнă.

Ултавлăн тата кĕтмен çĕртен тапăннă пирки вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче пулнă усăллă енсем нимĕçсен текех çук ĕнтĕ. Нимĕçсен фашистла войскисем кĕтмен çĕртен тата сасартăк тапăннă пирки пулнă резерв пĕтĕмпех расходланса пĕтнĕ. Çапла вара нимĕç фашисчĕсем кĕтмен çĕртен тапăннă пирки вăрçă условийĕсенче пулнă танмарлăх пĕтсе ларчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрçă кунçулне кĕтмен çĕртен тапăннă пирки пулнă факторсем мар, яланах пыракан факторсем: тылăн çирĕплĕхĕ, çарăн шухăшкăмăлĕ, дивизисен хисепĕпе пахалăхĕ, çарсене хĕçпăшаллантарни, çарăн начальствующи составĕн организаторла пултарулăхĕсем татса параççĕ. Кунта çак обстоятельствăна та палăртса хăвармалла: кĕтмен çĕртен тапăннă пирки пулнă лайăх самант нимĕçсен арсеналĕнче пĕтсенех, нимĕçсен фашистла çарĕ катастрофа умне тухса тăчĕ.

Нимĕç фашисчĕсем хăйсен çарне никам та çĕнтерме пултараймасть тесе шутлаççĕ, вăрçăра пĕчченшерĕн тĕл пулсан вăл Хĕрлĕ Çара аркатса тăкать, теççĕ. Халĕ Хĕрлĕ Çарпа нимĕçсен фашистла çарĕ пĕр-пĕрне хирĕç вăрçăра пĕчченшерĕн çапăçаççĕ. Ку çеç те мар, нимĕçсен фашистла çарне фронтра Итали, Румыни, Финлянди войскисем тÿррĕнех пулăшса тăраççĕ. Хĕрлĕ Çарăн халлĕхе çавăн пек пулăшу çук-ха. Мĕнха вара? Нимĕçсен мухтаса пĕтернĕ çарĕ поражени тÿсет, Хĕрлĕ Çар вара чылай пысăк ăнăçусем тăвать. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапнине пула нимĕç войскисем, Хĕвеланăç еннелле чакса пырса, çынсем тĕлĕшпе те, техника тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тăваççĕ. Вĕсем хăйсем арканса каяс куна малалла тăсас тесе, кашни рубежрах тытăнса тăма хăтланаççĕ. Анчах та тăшман ахалех тапаçланать. Пуçарулăх халĕ ĕнтĕ пирĕн алăра, Гитлерăн тутăхса хавшаса çитнĕ машини темле тăрăшсан та Хĕрлĕ Çар хĕснине тытса чарма пултараймасть. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пырса çапса тискер тăшмансене Ленинград патĕнчен хăваласа ярас, Белоруссипе Украинăн, Литвапа Латвин, Эстонипе Карелин хулисемпе ялĕсене тăшманран тасатас, Совет Крымне ирĕке кăларас, пĕтĕм совет çĕршывĕ çинче хĕрлĕ ялавсем каллех çĕнтерÿллĕн ялкăшма тытăнас вăхăт инçе мар ĕнтĕ.

Анчах та халĕ тунă ăнăçусемпе лăплански ларни, нимĕç войскисене пĕтерсе тăкнă тесе шутлани каçарма çук йăнăш пулнă пулĕччĕ. Ку вăл мухтанчăклăх тата пушă капайчăклăх, совет çыннисене тивĕçлĕ мар ĕç пулнă пулĕччĕ. Малашне татах та нумай йывăрлăхсем пуррине манма юрамасть. Тăшман поражени тÿсет, анчах та ăна аркатса тăкман-ха, — унтан та ытларах, — ăна пĕтерсе тăкманха. Тăшман вăйлă-ха. Ăнăçусем тăвас тесе, вăл юлашки вăйĕсене пухĕ. Вăл мĕн чухлĕ ытларах поражени тÿсĕ, çавăн чухлĕ тискерленсе пырĕ. Çавăнпа та пирĕн çĕршывра фронта пулăшма резервсем хатĕрлессине пĕр минутлăха та вăйсăрлатмалла мар. Урса кайнă тăшмана çĕнтермешкĕн çĕнĕрен çĕнĕ çар чаçĕсене фронта ярса тăрас пулать. Пирĕн промышленноçăн, уйрăмах çар промышленноçĕн икĕ хут ытларах вăй хурса ĕçлемелле. Фронт танксем, самолетсем, орудисем, минометсем, пулеметсем, винтовкăсем, автоматсем, боеприпассем кунран кун ытларах та ытларах илсе тăмалла тăвас пулать.

Çакă ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн вăйĕпе хăвачĕн тĕп çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăрать. Анчах Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ пĕр çакăнта кăна мар.

Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ, чи малтан, çакăнта пулать: вăл захватчикла, империалистла вăрçă мар, отечественнăй, ирĕке кăларакан, тĕрĕслĕхлĕ вăрçă туса пырать. Хĕрлĕ Çарăн задачи—пирĕн совет территорине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларасси, нимĕç захватчикĕсен пусмăрĕ айĕнчен пирĕн хуласемпе ялсенчи граждăнсене, вăрçăччен ирĕклĕ пулнăскерсене тата этемле пурăннăскерсене, халĕ пусмăр айне пулнăскерсене, çаратнипе, юхăнтарнипе, выçлăхпа асапланакансенсене, ирĕке кăларасси пулса тăрать. Юлашкинчен, хамăрăн хĕрарăмсене нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен мăшкăлĕпе пусмăрĕнчен ирĕке кăларасси пулса тăрать. Çакăн пек задачăран тасараххи, хисеплĕреххи мĕн пулма пултарать-ха? Нимĕçсен пĕр салтакĕ те тĕрĕс вăрçă туса пыратăп тесе калама пултараймасть, мĕншĕн тесен вăл хăйне ытти халăхсене çаратассишĕн, пусмăрлассишĕн çапăçтарнине курмасăр тăма пултараймасть. Нимĕç салтакĕн вăрçăра ăна хавхалантарма пултаракан, ăна мухтанма май паракан таса та хисеплĕ тĕллев çук. Тата тепĕр майлă та, Хĕрлĕ Çарăн кирек хăш боецĕ те хăй тĕрĕслĕхлĕ вăрçă, ирĕке кăларакан вăрçă туса пыни çинчен, вăл хăйĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн вăрçни çинчен мăнкăмăллăн каласа пама пултарать. Хĕрлĕ Çарăн вăрçăра паттăр ĕçсем тума хавхалантаракан хăйĕн таса та хисеплĕ тĕллев пур. Отечественнăй вăрçă хăйсен тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕшĕн вилме те хатĕр тăракан пиншер геройсемпе героинясем çуратса кăларнине çакăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ.

Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ.

Çакăнтах ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарĕн вăйсăрлăхĕ.

Ютçĕршыв хаçачĕсенче тепĕр чухне: Хĕрлĕ Çар хăй умне нимĕç халăхне вĕлерсе пĕтерес, Германи государствине пĕтерсе тăкас тĕллев лартать, тесе сÿпĕлтетеççĕ. Ку вăл, паллах, ухмахла сÿпĕлтетни тата Хĕрлĕ Çар çинчен ăссăр элек сарни пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн çакнашкал идиотла тĕллевсем çук, пулма та пултараймаççĕ. Хĕрлĕ Çарăн тĕллевĕ — хамăрăн çĕршывран нимĕç оккупанчĕсене хăваласа кăларса ярасси тата совет çĕрне нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен ирĕке кăларасси пулса тăрать. Паллах, Совет çĕрне ирĕке кăларассишĕн пыракан вăрçă Гитлерăн ушкăнне хăваласа ярасси патне е ăна пĕтерсе тăкасси патне илсе пыма пултарать. Ĕç çакăн пек вĕçленнине эпир саламланă пулăттăмăр. Анчах Гитлер ушкăнне Германи халăхĕпе, Германи государствипе пĕрпеклетсе хаклани кулăшла пулнă пулĕччĕ. Истори опычĕ çакна кăтартса парать: Гитлерсем килеççĕ те каяççĕ, Германи халăхĕ вара, Германи государстви вара çав-çавах юлать.

Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ, юлашкинчен, çакăнта пулать: вăл ытти халăхсене, çав шутрах нимĕç халăхне те, массăллăн курайманни çук, пулма та пултараймасть, вăл пур халăхсемпе рассăсем çине те пĕртан пăхма, ытти халăхсен прависене хисеплеме вĕренсе воспитани илнĕ. Нимĕçсен расса теорийĕ тата рассăсене курайманнин практики ирĕке юратакан пур халăхсем те фашистла Германин тăшманĕсем пулса тăрасси патне илсе çитерчĕ. ССР Союзĕнчи рассăсен пĕртанлăхĕн теорийĕ тата ытти халăхсен прависене хисепленин практики ирĕклĕхе юратакан пур халăхсем те совет халăхĕн тусĕсем пулса тăрасси патне илсе çитерчĕ.

Çакăнта ĕнтĕ Хĕрлĕ Çарăн вăйĕ.

Çакăнтах ĕнтĕ нимĕçсен фашистла çарĕн вăйсăрлăхĕ.

Ютçĕршыв хаçачĕсенче тепĕр чухне: совет çыннисем нимĕçсене, шăпах ĕнтĕ вĕсем нимĕçсем пулнă пирки, курайманнăçĕ, Хĕрлĕ Çар нимĕç салтакĕсене, шăпах ĕнтĕ вĕсем нимĕçсем пулнă пирки, пĕтерсе тăкать, нимĕçсене пурне те курайман пирки Хĕрлĕ Çар нимĕç салтакĕсене тыткăна илмест, тесе сÿпĕлтетеççĕ. Ку та, паллах ĕнтĕ, çавăн пекех ухмахла сÿпĕлтетни, Хĕрлĕ Çар çинчен ăссăр элек сарни пулса тăрать. Хĕрлĕ Çарăн рассăсене кураймасăр тăни çук. Вăл çавăн пек ирсĕр туйăмсенчен таса, мĕншĕн тесен вăл рассăсем çине пĕртан пăхма, ытти халăхсен прависене хисеплеме вĕренсе воспитани илнĕ. Кунсăр пуçне, рассăсене курайманшăн пирĕн çĕршывра закон тăрăх айăпланине те манма юрамасть.

Паллах, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене, вĕсем пирĕн çĕршыва чуралантарма тăрăшнă пирки тата пирĕн войскăсем çавăрса илнĕ чухне те хĕçпăшала пăрахса тыткăна парăнма килĕшмен пирки, Хĕрлĕ Çарăн вĕсене пĕтерсе тăкма тивет. Вĕсене Хĕрлĕ Çар, вĕсем нимĕç сыннисем пулнăшăн мар, вĕсем пирĕн тăван çĕршыва чуралантарма тăрăшнă пирки пĕтерсе тăкать. Хĕрлĕ Çар, ытти кирек епле халăхăн çарĕ пекех, хăйĕн тăван çĕршывне чуралантаракансене, вĕсем мĕнле нацирен тухнине пăхмасăрах, пĕтерсе тăкма пултарать тата пĕтерсе тăкмалла та. Нумаях пулмасть Калинин, Клин, Сухиничи, Андреаполь, Торопец хулисенче тăракан нимĕç гарнизонĕсене пирĕн войскăсем хупăрласа илнĕ те вĕсене тыткăна парăнма сĕннĕ, тыткăна парăнсан, вĕсен пурнăçне сыхласа хăварма пулнă. Нимĕç гарнизонĕсем хĕçпăшалсене пăрахса тыткăна парăнма килĕшмен. Ăнланмалла ĕнтĕ, вĕсене вăйпа çапса кăлармалла пулчĕ, çакăнта вара нимĕçсене сахалах мар вĕлерсе пĕтернĕ. Вăрçă вăл—вăрçах. Салтаксемпе офицерсем тыткăна парăнаççĕ пулсан, Хĕрлĕ Çар вĕсене тыткăна илет, вĕсен пурнăçне сыхласа хăварать. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем хăйсен хĕçпăшалне пăрахма килĕшмеççĕ пулсан, вĕсем алла хĕçпăшал тытса пирĕн çĕршыва чуралантарма тăрăшаççĕ пулсан, Хĕрлĕ Çар вĕсене пĕтерсе тăкать. Вырăссен аслă писателĕн Максим Горькин сăмахĕсене аса илĕр-ха: «Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтерсе тăкаççĕ», тенĕ вăл.

Юлташсем-красноармеецсемпе краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, партизансемпе партизанкăсем! Сире Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа саламлатăп! Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене татăклăнах çĕнтерме Сире сывлăх сунатăп!

Сывă пулччăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пулччăр партизансемпе партизанкăсем!

Пирĕн мухтавлă çĕршыв, унăн ирĕклĕхĕ, унăн никама пăхăнманлăхĕ сывă пулччăр!

Пире çĕнтерÿ патне ертсе пыракан большевиксен аслă партийĕ сывă пултăр!

Аслă Ленинăн никам çĕнтерейми ялавĕ сывă пултăр!

Ленин ялавĕпе, малалла, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене аркатса тăкма!

Оборона Халăх Комиссарĕ И. СТАЛИН.

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флот Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

1942 çулти февралĕн 23-мĕш. № 27. Мускав хули

Юлташсем—краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем!

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 24 çул тултарнă куна пирĕн çĕршыв совет халăхĕн нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене хирĕç туса пыракан отечественнăй аслă вăрçă условийĕсенче уявласа ирттерет.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн нимĕç захватчикĕсене хирĕç пĕрремĕш хут çеç мар тĕл пулма тÿр килет. 1918 çултах Совет Российин хĕçпăшаллă çамрăк вăйĕсем нимĕç салтакĕсене лайăх ăс кĕртсе янă. Юлашки çулсем хушшинче пирĕн çĕршыври халăхсем, большевиксен партийĕ, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене юратса тăтăшах çирĕплетсе пычĕç, промышленность предприятийĕсем, оборона предприятийĕсем турĕç, колхозсем организацилерĕç, халăх хуçалăхне, наукăпа культурăна çавтери çÿле çĕклерĕç. Совет çыннисем хăйсен çĕршывĕн оборонине çирĕплетес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени тăшмана хирĕç кĕрешес ĕçре иксĕлми вăй-хăват илсе тăмалли çăлкуç туса хучĕ.

Нимĕçсен фашистла çарĕ пирĕн Тăван çĕршывăн территорийĕ çине ултавлăн килсе кĕрсен, пирĕн столица Мускав патне сывхарса пырсан, Кавказ çинелле, Атăл çинелле, тырпулпа нефть патнелле кармашма тытăнсан, совет халăхĕ, хăйĕн юратнă, аслă çулпуçĕ Сталин юлташ ертсе пынипе, çухалса каймарĕ, хăраса ÿкмерĕ, вăл мĕнпур çĕршыва пĕрлĕхлĕ боевой лагерь туса хума, тăшман урнă пек хаяррăн хĕснине хирĕç тăма çителĕклĕ вăй-хăват тупрĕ. Каярахпа пирĕн войскăсем вăйлăн пыра-пыра çапни нимĕçсен фашистла войскисене çырсе парахрĕ, вĕсене чакмалла турĕ, чакнă май вĕсем хăйсен техникине, хĕçпăшалне, боеприпасĕсене, хăйсен çĕршер пин вилнĕ тата аманнă салтакĕсемпе офицерĕсене пăрахса хăвараççĕ.

Хамăрăн вăйсене нимĕн иккĕленмесĕр шанса тăни тата пирĕн Правительство ăста ертсе пыни тăшмана çĕнтерÿллĕн аркатса пĕтерсе тăкма совет воинĕсене пулăшрĕ, халĕ те пулăшса пырать.

Тăшмана питĕ вăйлăн пыра-пыра çапнă, анчах пирĕн çакăнпа лăпланса лармалла мар, тăшман халĕ те вăйлăха. Тăшман, хăй тÿсекен пысăк çухатусене шута илмесĕрех, кашни рубежра, халăх пурăнакан кашни пунктра тытăнса тăма тăрăшать, тăшман пирĕн войскăсене хирĕç контратака тума хăтланать, хăйсем пурĕ-пĕр пĕтессине сисет, вăл тыткăна лекнĕ çар çыннисене, аманнă красноармеецсемпе краснофлотецсене çавтери тискеррĕн асаплантарать, хăй советăн вăхăтлăха тытса илнĕ районĕсемпе облаçĕсенче пирĕн ача-пăчасене, шăллăм-йăмăксене, йăмăк-аппасене, аттесене вĕлерет.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ хăйсем 24 çул тултарнине Совет çĕршывĕн тăшманĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче татах та ытларах çирĕпленсе кĕтсе илеççĕ. Тăшман хаяррăн хирĕç тăнине аркатса, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ фашистла çаратуçăсене, çынвĕлерекенсене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыраççĕ, совет хулисемпе ялĕсене гитлерла çынçиенсен пусмăрĕ айĕнчен ирĕке кăлараççĕ.

Пирĕн флотăн подводникĕсем, летчикĕсем, катерникĕсем, артиллеристĕсем фашистсен транспорчĕсемпе çар карапĕсене сахал мар аркатса тăкса шыва путарнă. Çар морякĕсем Хĕрлĕ Çарпа алла-аллăн тытăнса Ленинграда, Севастополе, пирĕн Тăван çĕршывăн çурçĕрти чиккисене паттăррăн хÿтĕлеççĕ. Пирĕн çар морякĕсем тинĕсре те, типçĕр çинче те, сывлăшра та хăрама пĕлменнишĕн, паттăррăн та хăюллăн çапăçнăшăн пирĕн мĕнпур совет халăхĕ мухтанать. Çĕнтерÿ хăй тĕллĕн пулманнине эпир пĕлетпĕр. Çĕнтерÿ хаяр çапăçусенче çĕнтерсе илмелле. Тинĕс-Çар Флотĕнчи кашни краснофлотец, командирпа политработник тума тивĕçлĕ ĕç вăл—хăйсен вăрçă ĕçĕнчи пĕлÿлĕхне, çапăçури опытне ÿстерсе пырасси пулса тăрать, нимĕçсен фашистла çарĕпе флотне тĕппипех аркатса тăкас задачăна пурнăçа кĕртес тесе, хăйсенчен килекен ĕçсене пурне те тумалла.

Юлташсем-краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем!

Тăшмана, Совет Союзĕн Геройĕсем пекех, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн гвардеецĕсемпе орденоносецĕсем пекех, пыра-пыра çапăр.

Тăшмана пирĕн таса çĕршывран хăваласа кăларакан Хĕрлĕ Çарăн флангĕсене тинĕс енчен шанчăклă хÿтĕлесе тăрăр. Тинĕсре те, типçĕр çинче те питĕ хăвăрт малалла куçса пырса, пирĕн войскăсем хĕснине гитлеровецсем тытса чарма хаяррăн хăтланнисене аркатса пырăр, унăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пĕтерсе тăкăр.

Ленинградпа Севастополе паттăррăн хÿтĕлекенсем!

Хĕрлĕ Çарпа пĕрле тăрса, нимĕç оккупанчĕсене тата вĕсен Италирен, Румынирен, Финляндирен килнĕ хÿрешкисене нимĕн хĕрхенмесĕр аркатса тăкăр, Мускав таврашĕнчи çĕрсем тăшманăн войскисемшĕн вилĕм шăтăкĕ пулса тăнă пекех, Ленинградпа Севастополь таврашĕнчи çĕрсене те тăшманшăн вилĕм шăтăкĕ туса хурăр.

Юлташсем-краснофлотецсем, командирсемпе политработниксем, Сире мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 24 çул тултарнă ятпа саламлатăп!

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 24 çул тултарни сывă пултăр!

Халăхшăн тавăракансем—совет партизанĕсем сывă пулччăр!

Ленин—Сталин партийĕ—Хĕрлĕ Çарпа Флотăн çĕнтерĕвĕсен организаторĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр пирĕн кĕрешÿри çулпуç Сталин юлташ!

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ адмирал Н. КУЗНЕЦОВ.

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Мускавра пулнă чаплă лару

Февралĕн 22-мĕшĕнче Чайковский ячĕпе тăракан залра Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 24 çул тултарнă ятпа столицăри партипе совет тата обществăллă организацисен, çар чаçĕсенчи боецсемпе, командирсемпе пĕрле чаплă лару пулса иртнĕ.

Ларура Оборона Халăх Комиссарĕн заместителĕ 1-мĕш рангри армейски комиссар Е. А. Щаденко юлташ доклад туса панă.

Ларăва пухăннă халăх Сталин юлташ патне ямалли салама питĕ пысăк хавхаланупа йышăннă.

Чаплă лару хыççăн пысăк концерт пулнă. Концерта столицăри чи лайăх артистсем хутшăннă. (ТАСС).

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕНЧЕН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ СОЛНЕЧНОГОРСК ХУЛИ УРАМĔСЕНЧЕ (Мускав облаçĕ). Ÿкерчĕк çинче: райисполком председателĕ Ф. С. Мордашев юлташ (сылтăмра) хула çыннисемпе калаçать. Фашистла захватчиксем хуçаланнă вăхăтра Мордашев юлташ, партизансен отрядне ертсе пырса, гитлерла захватчиксене хăваласа кăларма, вĕсене вĕлерсе пĕтерме Хĕрлĕ Çар чаçĕсене нумай пулăшнă. (Л. Велинжанин фотоÿкерчĕкĕ).

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа столицăри профактив туса ирттернĕ чаплă лару

Февралĕн 23-мĕшĕнче Союзсен Çуртĕнчи Колоннăй залра Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа столицăри профактивпа стахановецсем, çар чаçĕсенчи боецсемпе, командирсемпе тата политработниксемпе пĕрле пухăнса, чаплă лару туса ирттернĕ.

Ларура Совет профсоюзĕсен çак кунсенче Англирен таврăннă делегаци членĕсем тата делегацие ертсе пынă ВЦСПС секретарĕ Н. М. Шверник юлташ пулнă.

Ларура старши батальоннăй комиссар Скосырев юлташ доклад тунă.

Ларăва пынă çынсем пысăк хаваслăхпа Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăннă.

Чаплă лару хыççăн столицăри чи лайăх артистсем пысăк концерт лартса панă. (ТАСС).

Осети халăхĕн мухтавлă ывăлĕ Хадзимурза Мильдзихов

СУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа чаçсемпе подразделенисенче пуçланса кайнă боевой ăмăртура нумай боецсем, командирсемпе политработниксем хăюлăхăн, паттăрлăхпа геройлăхăн питĕ паха примерĕсене кăтартса панă. Çакнашкал примерсенчен пĕрин çинчен, çапăçура 108 нимĕçе пĕтерсе тăкнă Хадзимурза Мильдзихов çинчен Совет Информаци Бюровĕ ĕнер пĕлтернĕччĕ.

Çак мухтавлă çапăçу çинчен тĕплĕнрех каласа парăпăр.

Хадзимурза Мильдзихов пирĕн боецсен отрячĕпе пĕрле тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Çĕрле, отряд комиссарĕ панă приказ тăрăх, Мильдзихов юлташ çапăçура аманнă боецсене илсе тухнипе тухманнине тĕрĕслеме кайнă. Каялла таврăннă чухне вăл тăшманăн ДЗОТ-ĕ патне пырса тухнă. Нимĕçсем ДЗОТ ăшĕнчен икĕ пулеметран персе тăнă. Хадзимурза Мильдзихов тăшман тăвăллăн персе тăнă вăхăтрах фашистсен йăви патне шуса пынă та унта пытанса ларнă нимĕçсем çине автоматран пеме пуçланă. Фашистсем тарма тытăннă. Вĕсенчен ултă çынна Мильдзихов юлташ тĕл персе ÿкернĕ, 5 фашистăн çеç тарса çăлăнма май килнĕ. Паттăр боец тăшманăн блиндажне тытса илнĕ, противникăн 6 винтовка, 1 пулемет пĕтерсе тăкнă, икĕмĕш пулемете патронсемпе пĕрлех хăйĕн чаçне илсе пынă.

Тепĕр кунне Мильдзихов юлташпа Чернов лейтенант разъездра тухса кайнă. Вăрмантан тухсанах вĕсем нимĕçсен пысăк ушкăнне тĕл пулнă та, пирĕн боецсем вара кукмак хĕррине пытанса выртнă. Хаяр çапăçу пуçланса кайнă. Тăшманăн пульли Чернов лейтенантăн автоматне çĕмĕрсе пăрахнă. Мильдзихов юлташ пирĕн пулăшу пырса çитиччен тăшмана тытса чарма шутланă. Нимĕçсем пур енчен те тапăнса пынă. Паттăр çине вĕсем виçĕ пулеметран пенĕ. Мильдзихов юлташăн кĕрĕкне, алсисене, кутамккине темиçе çĕртен те персе шăтарнă. Анчах паттăр пĕр самантлăха та пеме чарăнман. Нимĕçсен кукмак çине пырса тухнă пĕррĕмĕш ушкăнне—60 çынна—паттăр автоматчик пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Урса кайнă тăшман пирĕн героя хирĕç хăйсен салтакĕсен татах çĕнĕ ушкăнне янă. Пирĕн герой урнă шакалсен кĕтĕвне хирĕç пĕр сехете яхăн çапăçнă. Çак вăхăтра вăл 108 нимĕçе пĕтерсе тăкнă. Пирĕн пулăшу пырса çитсен, тăшманăн ушкăнĕ васкасах тарма тытăннă.

Боецсем каялла таврăнсан, Мильдзихов юлташа медсанбата ăсатнă. Анчах та вăл, хăйпе пĕрле командир таврăнманнине пĕлсен, госпитальрен вăрттăн тухнă та татах тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Хăюллă боец çĕр каçах хăйĕн командирне шыранă, анчах ăна инçта та шыраса тупайман. Кăнтăрлапа Мильдзихов юлташ малтанхи кун çапăçу пулса иртнĕ вырăна пырса тухнă. Унта вăл тăшманăн танксене хирĕç пемелли туппине тĕл пулнă. Туппăн прислуги çине кĕтмен çĕртен тапăнса, вăл нимĕç артиллеристĕсене пĕр çын хăвармасăр пĕтерсе тăкнă. Çакăн хыççăн вăл вилнĕ командирăн ÿтне тупнă та, унран тăшмансем мăшкăллама ан пултарччăр тесе, ăна пытарнă.

Мильдзихов юлташ — комсомолец, вăл 23 çулта, осетин çынни.

Ю. КОРОЛЬКОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 20-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе пăрахса, малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсен 16 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 6 танкне, войскăсемпе грузсем тиенĕ 240 автомашинине, горючи тултарнă автоцистернине, боеприпассемпе войскăсем тиенĕ 65 лавне, 19 орудине, зенитнăй пулеметсен 4 точкине, 20 минометне пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 4 вагона çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине икĕ батальона çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче çапăçакан пирĕн чаçсем, противник вăйлăн хирĕç тăнине сирсе пăрахса, пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 15 пункта йышăнса илнĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ. П. пунктăн районĕнче румынсен пехотин икĕ батальонне çапса аркатнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăнне 2 танк, 4 оруди, 14 пулемет, 3 миномет тытса илнĕ тата 14 танк, 39 оруди пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 500 вилли выртса юлнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем нимĕçсен контратакисене сирсе пăрахса, малалла куçнă, халăх пурăнакан 8 пункта йышăнса илнĕ тата противникăн чĕрĕ вăйĕпе техникине пысăк çухатусем кӳнĕ. Халăх пурăнакан М. пунктшăн пынă çапăçура кăна 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ.

* * *

Реутов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенири артиллеристсем (Хĕвеланăç фрончĕ), тăшман полкĕн контратакине сирсе пăрахса, противникăн пехотине танксенчен уйăрса илнĕ те тăшманăн салтакĕсене 400 çынна çити пĕтерсе тăкнă тата сапаласа янă.

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç автоматчик Хадзимурза Заурбекович Мильдзихов геройла çапăçать. Вăл — осетин, Çурçĕр Осетин Автономлă республикинчи Эльхотово ялĕнче çуралнăскер. Нумаях пулмасть вăл, противник персе тăнине пăхмасăрах, тăшманăн ДЗОТ-ĕ патне шуса пынă. Нимĕçсем çав ДЗОТ-ран пирĕн чаçсем çине пулеметсенчен персе тăнă пулнă. Мильдзихов автоматран персе ДЗОТ-ран 11 гитлеровеца хăваласа кăларнă. Вĕсенчен 6-шне вĕлернĕ, ыттисем тарса пĕтнĕ. Çакăн хыççăн часах, Мильдзихов юлташ Чернов лейтенантпа пĕрле разведкăра пулса, нимĕçсен пысăк ушкăнне тĕл пулнă та вĕсене хирĕç çапăçма тытăннă. Черновăн автоматне тăшманăн пульли тивсе çĕмĕрнĕ. Мильдзихов юлташ пулăшу пырса çитиччен пĕччен нимĕçсене хирĕç çапăçнă. Хадзимурза Мильдзихов юлташ çак çапăçура 108 нимĕçе вĕлернĕ. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа хăюллă разведчик нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 130 çынна вĕлернĕ.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Ганс Кейцлер çумĕнче дневник тупнă. Акă мĕн çырнă вăл дневник çине:

«**Декабрĕн 10-мĕш.** Тревога. Вырăссен самолечĕсем пирĕн çине вĕçсе килсе тапăнчĕç.

Декабрĕн 14-мĕш. Çапăçу, эпир каялла чакатпăр.

Декабрĕн 15-мĕш. Вырăссем пире хăваласçĕ. Эпир пысăк çухатусем тӳсетпĕр.

Январĕн 3-мĕш. Манăн урасене тăм илчĕ. Пурнăç питĕ хăрушă.

Январĕн 15-мĕш. Эпĕ обозра. Вилĕм питĕ çывăхрачче. Часах акă вăл чи лайăх тус пулĕ.

Январĕн 27-мĕш. Цвар ухмаха ернĕ. Вăл заласри офицер пулнă.

Январĕн 28-мĕш. Цвар вилчĕ.

Январĕн 29-мĕш. Эпир каялла чакатпăр. Хăрушла сивĕ. Пулемет ĕçлеме чарăнса ларчĕ.

Январĕн 31-мĕш. Вăрман. Шартлама сивĕ. Унтер-офицер вилчĕ. Унтус—ротăри юлашки унтер-офицер. Кунта мĕн чухлĕ çын пĕтрĕ! Вырăссем пирĕн транспорт çине тапăннă.

Февралĕн 1-мĕш. Шатраллă тиф. Пирĕн 14 кун хушши изоляторта пулмалла. Апат-çимĕç питĕ сахал...»

* * *

Нимĕçсен 131-мĕш пехотнăй дивизийĕн 84-мĕш полкĕнчи 2-мĕш ротăран тыткăна парăннă салтак Иоганес Шмусневитц çапла каласа панă: «Декабрь уйăхĕн вĕçĕнче пирĕн ротăра 160 çын пулнă. Калугăран каялла чакнă чухне пирĕн 70 çын вилсе тата аманса пĕтрĕç. Январĕн 12-мĕшĕнче пирĕн ротăна 50 салтак хушса пачĕç. Унтан вара каллех 60 çын стройран тухрĕç. 16 салтакăнне урисене сыхтă тăм илнĕ. Рота командирĕ вĕсене госпитале ямарĕ, вĕсене шурне те стройа ячĕ. Эпир ялашах выçă».

* * *

Пирĕн войскăсем пырса çавăрăнсан Смоленск облаçĕнчи Редькино ялĕнчен каялла чакнă чухне нимĕçсем яла вут тивертсе хăварнă. Колхозниксен нĕ-

тĕм пурлăхĕсемпе пĕрлех 84 çурт çунса кайнă. Пушара сӳнтерме хăтланнă çынсене гитлеровецсем персе вĕлернĕ.

* * *

Растенбургра (Германия) нумаях пулмасть Германие пырса ютçĕршыв рабочийĕсем—итальянецсемпе румынсем, шатраллă тифпа чирленĕскерсем пурăнакан бараксенче пушар тухнă. Пушар вăхăтĕнче 300 ытла чирлĕ çын çунса кайнă. Пушара вырăнти штурмовиксем тунă тесе калама та пулать.

* * *

Грузири ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне фронтри боецсем, командирсем, комиссарсемпе политработниксем патне 65 тонна аш, 20 тонна ытла салă, ветчина тата колбаса, 20 пин штука кайăк-кĕшĕк ашĕ, 15 тонна сыр, 2 тонна ытларах çу, 21.500 декалитр эрех, 42 тонна панулми, 30 тонна цитрусовăй çимĕçсем, 30 тонна мăйăр, пыл, папироссем тата табак нумай ярса панă. Унсăр пуçне уйрăм çынсенчен 15 пин посылка янă.

Февралĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 23-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Саркисян тата Рогов юлташсем командир пулса ертсе пыракан подразделенисенчи боецсем, противника халăх пурăнакан икĕ пунктран хăваласа кăларса, 4 оруди, 20 миномет, 28 пулемет, патронсемпе ытти çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Сазонов юлташ командир пулса тăракан часть (Калинин фрончĕ) халăх пурăнакан Л. пункта йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 350 çын вилсе тата аманса выртса юлнă. Çак çапăçура пулеметчик Горбылев юлташ хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Вăл, патронсен запасĕ пĕтсен, нимĕçсен пулемечĕ патне, пирĕн наступлени тăвакан подразделени çине персе тăраканскер патне йăпшăнса пынă та гранатăсем ывăтнă. Горбылев юлташ пулеметăн расчетне пĕтерсе тăкнă та пулемета тытса илсе противник çинелле пеме тытăннă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть пĕр кун хушшинче тăшманăн 4 орудине, минометсен икĕ батарейине, 12 пулеметне пĕтерсе тăкнă, 4 танкне персе çĕмĕрнĕ тата оруди, 3 пулемет, 2 автомат, 114 винтовка тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 450 çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн разведчиксен группи старши сержант Волков ертсе пынипе нимĕçсен тылне кĕрсе кайнă. Хăюллă боецсем тăшманăн блиндажĕсем çине гранатăсем вăркăнтарнă та нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 20 çынна пĕтерсе тăкнă. Разведчиксен группин çухату пулман. Вĕсем нимĕçсен пĕр салтакне тыткăна илсе тата пысăк калибрлă пулемет, темиçе винтовка тытса илсе, хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Батраков юлташăн чаçĕнчи зенитчиксем фашистсен транспорт самолетне персе ӳкернĕ. Çав самолет халăх пурăнакан Н-ски пунктри нимĕç гарнизонне, пирĕн чаçсем çавăрса илнĕскерне, валли çăкăр пăрахса пама хăтланнă. Самолет экипажĕнчи 8 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Орел облаçĕн территорийĕнче кĕрешекен К. тата В. юлташсен партизанла отрячĕсем нимĕçсен чаçĕн штабĕ вырнаçнă Х. ялĕ çине пырса тапăннă. Гитлеровецсем, паникăна ӳксе, çывăхри аэродром патнелле тарнă. Партизансем тытса илесрен хăраса, нимĕçсем аэродром çинчи 4 бомбардировщика тата «Юнкерс» йышши 13 транспортнăй самолета çунтарса янă.

* * *

Пирĕн чаçсем, финсен 30-мĕш пехотнăй полкне çапса аркатнă чухне, полк штабĕн документĕсене тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче финсен çарĕн верховнăй командованийĕн тĕп квартирĕ кăларнă 21-мĕш номерлĕ бюллетень пур. «Пуçтарса çӳрекен салтаксем çинчен» ятлă 5-мĕш параграфра çапла каланă: «Салтаксем, çул çинче çӳренĕ чухне, граждăнла халăхран укçа-тенкĕ, çăкăр, табак тата ытти япаласем те тархаслаcа пуçтарса çӳренине асăрханă. Начальствующи составăн салтаксене çакăн пирки ăнлантарса памалла: пуçтарса çӳрени финсен çарĕнчи салтакăн тивĕçлĕхне варалать. Çавăнпа та кирек мĕнле пулсан та пуçтарса çӳресси пулмалла мар! Управлени штабĕн начальникĕ генерал-майор Тумпио». Анчах та приказ приказпа, финн салтакĕсем пуçтарса çӳресси чарăнман, вăл татах та анлăнрах сарăлса кайнă кăна.

* * *

Нимĕçсен 44-мĕш пехотнăй дивизийĕн 134-мĕш полкĕнчи 8-мĕш ротăран тыткăна парăннă салтак Даниэль Антон çапла каласа панă: «Пирĕн дивизие кĕркуннех питĕ хытă хавшатрĕç. Анчах халĕ, вырăссем наступлени тума тытăнсан, уйрăмăнах пысăк çухатусем пулчĕç. Чылай ротăсенче 20—30 çын кăна юлнă. Чаçсенче тăм илтерникем питĕ нумай. Салтаксен шухăш-кăмăлĕ питĕ начар. Салтаксем çапла каласçĕ: «Эпир кунтан тухаймастпăр ĕнтĕ, пирĕн малалла та, каялла та çул çук». Нумаях пулмасть пирĕн ротăра пĕр салтака вăл хăйĕн юлташĕсене тыткăна парăнма чĕннĕшĕн персе вĕлерчĕç. Ротăсенче час-часах дисциплинăна пăснăшăн, çартан тарнăшăн тата тыткăна парăнма хăтланнăшăн наказанисем пани çинчен, вĕлермелле туса приговорсем йышăнни çинчен приказсем вуласа параççĕ».

* * *

Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа Приморски крайри ĕçсыннисем действующи армие парнесем нумай ярса панă. Боецсемпе командирсене, политработниксене парнелеме 120 пин ытла тĕрлĕрен япаласем, çавăн шутĕнче 32 тонна печени, 27,3 тонна аш, 10 тонна пулă, 3 тонна çурă сахăр, 3 тонна колбаса, пĕр тонна сыр, 2300 килограмм пыл, 800 килограмм сало, 970 килограмм усламçу, 7 пин банка консерва, 12 пин пачка махорка, 10 пин катăк супăнь тата 3 пин бутылка эрех ярса панă.

Февралĕн 23-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, противника хирĕç вăйлăн çапăçса, каллех малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра Дорогобуж хулине йышăнса илнĕ.

Тĕрĕсленĕ даннăйсем тăрăх, февралĕн 21-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан пĕлтернĕ пек 16 самолет мар, 26 самолет персе антарнă.

Февралĕн 22-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче противникăн 20 самолетне персе антарнă, тăшманăн аэродромĕсем çинче 8 самолет пĕтерсе тăкнă. Пĕтĕмпе çав кун нимĕçсен 28 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 23-мĕшĕнче Мускав патĕнче нимĕçсен пĕр самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Февралĕн 23-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 4 танкне, 29 орудине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 380 ытла автомашинине, боеприпассем тиенĕ 225 лавне, зенитнăй пулеметсен 16 точкине, минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, боеприпассен икĕ складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, чугунçул çинчи 6 вагона тата виçĕ паровоза çĕмĕрнĕ, противник пехотин 4 батальонне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть тăшманăн танкне, пĕр орудине, войскăсемпе грузсем тиенĕ 11 автомашинине тата горючи тултарнă автоцистернине пĕтерсе тăкнă. Çав участокра противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын вилсе пĕтнĕ.

* * *

Вострухов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçсем (Калинин фрончĕ) юлашки икĕ кун хушшинче халăх пурăнакан 14 пункта нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă. Çапăçусенче çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 51 пулемет, 1 оруди, 4 миномет, 14 пин штука винтовка патронĕсем, 29 ещĕк мина тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай. Çапăçу хирĕнче противникăн 500 çынна çити вилсе выртса юлнă. Тепĕр участокра Горбунов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть хаяр çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 250 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Алябьев командира 10 танкран тăракан отрядпа тата йĕлтĕрлĕ десантпа пĕрле тăшманăн тарăн тылне кĕрсе кайма приказ панă. К. ялĕ патĕнче отряда нимĕçсен танксене хирĕç пемелли орудисем, минометсем тата пулеметсем вăйлă вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ. Отряд хăюллă атака тунă та тăшманăн 4 орудине пĕтерсе тăкнă, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 80 çынна персе вĕлернĕ. Танкистсен отрячĕ малалла куçса пынă чухне нимĕçсен К. ялĕнчи гарнизонне пулăшма каякан батарейине тĕл пулнă. Батарейăна пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Халăх пурăнакан пункта хăвартăн пырса кĕнĕ те отряд нимĕçсен çар соединенийĕн штабне аркатса тăкнă.

* * *

Аялараx Харьков облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕн командирĕн К. юлташăн дневникĕнчи хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр:

«**Декабрĕн 27-мĕш.** Отряд С. ялĕ патĕнчи вăрманта нимĕçсен карательнăй отрячĕпе тĕл пулчĕ. Партизансем çапăçăва кĕрсе 9 гитлеровеца вĕлерчĕç, ыттисем каялла чакрĕç.

Декабрĕн 29-мĕш. Нимĕçсем вырнаçнă Д. хуторĕ çине отряд кĕтмен çĕртен пырса тапăнчĕ. Пуçланса кайнă çапăçура нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 10 çынна вĕлертĕмĕр.

Январĕн 10-мĕш. Г. ялĕнче нимĕçсен продовольстви пысăк базине аркатрămăр.

Январĕн 17-мĕш. П. ялĕнче отряд нимĕç салтакĕсен пысăк ушкăнне хирĕç çапăçма тытăнчĕ. Гитлеровецсем партизансем хĕснипе чăтса тăраймасăр тарчĕç. Çапăçу хирĕнче эпир çĕмĕрнĕ икĕ грузовой машина выртса юлчĕ.

Январĕн 19-мĕш. В. ялĕнче нимĕçсен чаçĕпе тĕл пултăмăр та çапăçу пуçласа ятăмăр. Вилнисене шутласан кăна нимĕçсен 80 çын пĕтрĕ, аманнисем татах та ытларах.

Январĕн 26-мĕш. М. ялĕ патĕнче нимĕçсен карательнăй отрячĕ çине тапăнтăмăр. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене темиçе çынна пĕтерсе тăкрăмăр, карательнăй отрядăн начальникне вĕлертĕмĕр».

* * *

Нимĕçсен 57-мĕш пехотнăй дивизийĕн 217-мĕш полкĕнчи 8-мĕ ротăран тыткăна парăннă унтер-офицер Иоганн Кнедельзедер çапла каласа панă: «Пирĕн дивизире салтаксене халĕ çăкăр 3 куна 400-шер грамм анчах параççĕ. Кăнтăрлахи апат—çĕрулми шӳрпи, анчах та çĕрулмийĕ—вырăнти халăхран туртса илнĕскер. Чаçсенче медицина енĕпе ĕçлекенсем çитмеççĕ. Малти линире врачсем çук. Ман куç умĕнчех аманнă салтак Алекс Рах вилчĕ. Мĕншĕн тесен ăна вăхăтра медицина пулăшăвĕ паман. Салтаксем питĕ тарăхса çитнĕ, час-часах офицерсемпе хирĕçме тытăнаççĕ. Пирĕн ротăри салтака Михель Бернуэзра офицер батальон штабне приказ леçсе пама хушрĕ. Михель приказа пурнăçлама килĕшмерĕ тата çапла каларĕ: «Господин офицер, хусамăрах кайăр. Сирĕн тумтир ăшă, сире сивĕ витеймест, эпĕ çак тумтирпе каймастăп, терĕ». Офицер Михеле карабин прикладĕпе хĕнесе пĕтерчĕ тата ăна çар судне пачĕ».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем Смоленск облаçĕнчи Киров районĕнчи Анисово—Городище ялĕнче 60 çуртран 54-шне вут тивертсе çунтарса янă. Бандитсем колхозниксемпе вĕсен ачисене нумайĕшне асаплантарса вĕлернĕ. Сергей Лобачов колхознике гитлеровецсем çунакан çурта пăрахса çунтарса янă.

* * *

Казах ССР-чи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă май фронта 125 вагон парнесем янă. Алма-Ата облаçĕнчен кăна 8.000 килограмм пулă, 5.022 килограмм сало тата çу, 2.337 килограмм печени, 15.031 килограмм премĕк, 12.532 килограмм канфет, çырла-çимĕçсем, эрехсем тата ытти парнесем нумай янă. Уильск районĕнчи «Курман» колхозри звеньевой-орденоносец Чачанак Берсиев посылка ăнне хунă çырăвĕнче фронтовиксем патне çапла çырать: «Колхоз участокĕ çинче сире валли каллех парне хатĕрлетĕп. Иртнĕ çулта манăн звено гектартан 155 центнер вир пухса илсе тĕнчери рекорда турĕ. Халĕ эпĕ хамăн звенопа кăçал гектартан 170 центнер вир пухса илме хатĕрленетĕп. Гитлер бандичĕсене нимĕн хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкăр, эпир тылра хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр ĕçлесе, тăшмана çĕнтерес ĕçре сире пулăшатпăр».

Февралĕн 24-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 24-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлăн çапăçнă.

* * *

Кутлин юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть, Москаленко юлташ командир пулса ертсе пыракан кавалеристсемпе пĕрле пулса çапăçса, икĕ кун хушшинче халăх пурăнакан 10 пункта ытла ирĕке кăларнă. Çапăçура 2.500 гитлеровеца ытла вĕлернĕ. Нимĕçсен 200 салтакне тыткăна илнĕ. Пирĕн боецсем нимĕçсенне 39 пулемет, 6 миномет, 8 оруди, винтовкăсем тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Çак çапăçусенче Рубцов юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенинчи боецсем уйрăмăнах пысăк хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнă. Вĕсем, противникăн 5 контратакине сирсе пăрахса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 500 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть нимĕçсенне 3 танк, 4 оруди, 8 миномет, 9 пулемет, 60 ещĕк мина тата икĕ радиостанци тытса илнĕ. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 100 çын ытла вилсе пĕтнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Павловский юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем нимĕçсен виçĕ танкне пĕтерсе тăкнă, пĕр оруди, 5 миномет, 4 пулемет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 130 çын вилсе выртса юлнă.

* * *

Лейтенант Крючков командир пулса ертсе пыракан подразделенири боецсем танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен нимĕçсен икĕ транспортнăй самолетне персе антарнă. Çак самолетсем халăх пурăнакан пĕр пункта нимĕçсен ункăри гарнизонĕ валли бензин турттарнă пулнă. Икĕ самолечĕн экипажне те — 9 салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

* * *

Беззубов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри боецсем (Хĕвеланăç фрончĕ) И. ялĕшĕн пынă çапăçура тăшманăнне икĕ оруди снарячĕсемпе пĕрлех, 3 пулемет, патронсем тултарнă 12 ещĕк, радиостанци тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Старши лейтенант Райдофир ертсе пыракан танк экипажĕ икĕ кун хушши пынă çапăçура тăшман çине 5 хут атакăна кайнă. Хăюллă танкистсем нимĕçсен танксене хирĕç пемелли 4 орудине, 5 станковăй пулеметне, 3 минометне пĕтерсе тăкнă, икĕ ДЗОТ-не çĕмĕрнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 50 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Украина районĕсенчен пĕринче кĕрешекен К. юлташăн партизанла отрячĕ вăрманта засада тунă та нимĕçсен икĕ танкпа вăйлăлатнă карательнăй отрядне пĕтерсе тăкнă. Çапăçура пĕр танка гранатăсемпе пĕтерсе тăкнă, иккĕмĕш танкĕ партизансем хунă минăсем çине пырса кĕрсе сирпĕнсе кайнă. К. юлташăн отрядĕнчи боецсем темиçе кун хушшинче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 68 çынна пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисене тата трофейăсене партизансем Хĕрлĕ Çар чаçĕсене панă.

* * *

Нимĕçсен 76-мĕш пехотнăй дивизин 203-мĕш полкĕнчи 10-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Фриц Шнайдер çапла каласа панă: «Вăрçă вăраха кайни пирĕн салтаксене йăлăхтарса, асаплантарса çитерчĕ. Салтаксем пирĕн дивизин пысăк çухатусем пулнишĕн хуйхăраççĕ. Февралĕн 16-мĕш тĕлне пирĕн 10-мĕш ротăра пĕтĕмпе те 50 салтакпа офицер анчах юлчĕç. Вĕсенчен çапăçма пултараканнисем 28 çын кăна. 203-мĕш полкăн кашни батальонĕ рота пек кăна тăрса юлнă, полкăн вăйĕсем пĕр батальон вăйĕпе танлашаççĕ. Халĕ ĕнтĕ командовани музыкантсемпе ытти строя юрăхсăр çынсене те çапăçăва кĕртсе ярать».

* * *

Нимĕçсен 337-мĕш пехотнăй полкĕнчи вилнĕ ефрейтор Рихард Крюгер çумĕнче вăл хăйĕн тăванĕсем патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Вăл çапла çырнă: «Вырăссем пирĕн оборонăна татрĕç те, эпир темĕнле тамăка лекрĕмĕр. Пирĕн юлташсенчен чылайăшĕсем пĕтрĕç ĕнтĕ. Пирĕн кухня таçта, паллă мар. Эпир сухари анчах çиетпĕр. Тархашĕ хамăрăннисенчен манăнне япаласем хумалли хутаçра, кĕпе-йĕмсене тата бритва таврашĕсемпе ытти япаласене вăрланă».

* * *

Нимĕçсен фашистла мерзавецĕсем, Курск облаçĕнчи Солнцевски районри Лещинская Плота ялĕнчен тухса кайнă чухне 250 çурта вут тивертсе хăварнă. Нумай çынсем нимĕн япаласăр тата апат çимĕççĕр тăрса юлнă. Нимĕçсем килĕрен çаратса тухса Леонтьев Николай, Леонтьев Павел, Черников Егор, Леонтьева Надежда, Леонтьев Демьян, Леонтьев Василий, 4 ача амăшĕ пулса тăракан Леонтьева Мария колхозниксене персе вĕлернĕ.

* * *

Туллимар даннăйсем тăрăх, Хабаровск крайĕнчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă тĕле Действующи армин чаçĕсене боецсемпе командирсем тата политработниксем валли парнесемпе 67.439 посылка янă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Тыткăна лекнĕ красноармеецсене нимĕçсем тискер кайăкла тыткалани

ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Иртнĕ кунсенче пирĕн войскăсем нимĕçсене çирĕплетнĕ пaxa пунктран хăваласа кăларнă та пысăк трофейăсем, çав шутра хирти почта станцине, тытса илнĕ. Çав почта станцийĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене инçетри тылран ярса панă çырусем нумай тупнă.

Нумай çырусенче тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискер кайăкла асаплантарни çинчен уççăнах каласа панă. Германин инçетри тылĕнчен килнĕ çав çырусем ĕнтĕ тыткăна лекнĕ совет боецĕсене нимĕç баронĕсемпе помещикĕсен чурисем туса хунине никам хирĕçлейми кăтартса параççĕ; тыткăна лекнисем выçăпа çавтери асапланаççĕ, вĕсене тискер кайăкла хĕнеççĕ, хăрушла мăшкăллаççĕ, хĕçпăшалпа хăратса имешенче йывăр ĕçсем ĕçлеттереççĕ.

Унтер-офицер Гергард Венцель патне амăшĕ Сюпплингенран акă мĕн çырать: «Кунта фабрикăра ĕçлеме вырăссене хăваласа килчĕç, анчах та вĕсем выçăхнипе çавтери халран кайнă. Вĕсем çине пăхма та хăрушă. Роберт: вĕсен уринсем пирĕн аттен аллисенчен те сиçсерех, тесе калать».

Герберт Гердинг патне амăшĕ янă çырура çапла каланă: «Пирĕн концлагерьте 40 вырăс пурăнать. Вĕсене выçăпа асаплантараççĕ. Анчах вĕсен çапах та ĕçлемелле». Адресĕ çухалнă çырура çапла каланă: «Ял çывăхĕнчи концлагерьте вырăссем пур. Вĕсем çавтери выçăхса çитнĕ пирки уйри шăшисемпе выльăх-чĕрлĕх кăшманне те çиеççĕ».

Çапла ĕнтĕ Германирен килекен çырусем советăн тыткăна лекнĕ çар çыннисене варварла, тĕнчери мĕнпур правилăсене пăсса тытса усрани çинчен каласа параççĕ.

А. ВИКТОРОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ (Кăнтăр фрончĕ) Ӳкерчĕк çинче: сулахайра санинструктор А. М. Суховарова, Вăл çапăçу хирĕнчен 41 аманнă красноармееца йăтса тухнă, ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăланă. Сылтăмра — полк воспитанникĕ, 15 çулти Николай Демьянов. Пулеметран персе вăл тăшман контратакине чарса тăнă, çапăçу хирĕнчен аманнă лейтенанта йăтса тухнă. Çамрăк боеца «За отвагу» медальпе наградăланă. А. ЛЕВИТАН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Сухиничи хулинчи предприятисем куллен кирлĕ таварсем туса кăлараççĕ

СУХИНИЧИ (Смоленск облаçĕ), февралĕн 21-мĕш. (ТАСС). Гитлерла захватчиксене хуларан хăваласа кăларнă хыççăнхи малтанхи кунсенчен пуçласах ĕçсыннисем фашистсем юхăнтарса хăварнă хуçалăха юсаса йĕркелес ĕçе активлăн тытăннă. Халĕ ĕнтĕ вырăнти промышленноçăн хăшпĕр предприятийĕсем ĕçлеме те пуçланă.

Çăмата йăвалакан фабрика 500 мăшăра яхăн çăмата туса хатĕрленĕ, халăхран çăмата йăвалама заказ йышăнма тытăннă. Тир-сăран завочĕпе тир тăвакан мастерской 200 тир ытла туса кăларнă. Супăнь завочĕ ĕçлеме тытăннă. Завод туса кăларнă супăне халĕ сутма та пуçланă. Атă-пушмак юсакан тата çĕвĕ мастерскойĕсем уçăлнă. Хулари учрежденисемпе предприятисем валли ĕçлекен транспорт артелĕ организациленĕ.

Америка халăхĕн парнисем

Пирĕн умра—парнесем тултарнă ещĕксем. Ещĕк хуппишкийĕсем çийĕнче акăлчан чĕлхипе çырнă саспаллисем. Ку парнесене нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçакан Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсене тата политработникĕсене Америка халăхĕ ярса панă.

Парнесем хушшинче ăшă кăмăлпа çырса янă темиçе çыру. Вĕсем пурте Америка халăхĕ Совет боецĕсем Европăри ирĕке юратакан халăха ирĕке кăлараççине шанса тăнине кăтартаççĕ. Акă мĕн çырать хăйĕн çырăвĕнче Софья Григорт Сильверсмит американка:

«Маннăн хаклă тăванăмсем! Пирĕн пĕтĕм чĕререн янă пĕчĕк парнесене йышăнăр. Эпир сирĕнтен аякра пулсан та, сире, хаклă тăвансене, нимĕç йытисене хирĕç çапăçакан пиччесемпе аппасене нихăçан та манмăпăр. Сирĕн вăрçă кăл— пирĕн вăрçă. Юнĕçсен фашизма часах çĕнтерессе шансах тăратпăр!

Юлташла салампа Софья Григерт Сильверсмит».

Акă тата тепĕр çырăвĕ:

«Хаклă юлташсем! Пирĕн сигаретсем сирĕн çинчен пĕрмаях шухăшланине кăтартса пачĕç. Эсир тата сирĕн юлташăрсем нимĕç çарĕ валли вилĕм шăтăкĕ чавнине хамăр хаçатсенче кашни кунах вулатпăр. Халĕ эпир татах 30.000 сигарет илсе яма укçа пухма тытăнатпăр. Ку вăл пуçламăшĕ кăна. Эпир миллионăн. Пурте сире пăртак та пулин пулăшасшăн тăрăшатпăр. Сырăр.

Сире чĕререн хисеплесе Валтер Л. Салмон.

Нью-Йорк, США».

Çырусем татах та нумай.

Виçĕ çĕршывăн пĕрлĕхлĕ халăхĕн вăйĕ кашни кунах ӳссе пырать. Ирĕклĕхе юратакан халăхсем урнă нимĕç фашизмне çĕнтерессине çирĕппĕн ĕненсе тăраççĕ.

Красноармеец М. РЫБАКОВ.

Действующи арми.

ПАРТИ ПУРНӐÇӖ

Ӗçе коммунистсем ертсе пынӑ çӗрте

Фашистла захватчиксене хирӗç пыракан отечественнӑй аслӑ вӑрçӑ социализмлӑ ялхуçалӑхӑ умне пысӑк задачӑсем кӑларса тӑратрӗ. Ялхуçалӑхӗн тӑван çӗршыва, Хӗрлӗ Çара кирлӗ таран тырпул, аш-какай тата промышленность валли чӗртавар парса пымалла. Çак пысӑк та ответлӑ задачӑсене вӑхӑтра пурнӑçа кӗртес тесе, Калинински районри колхозсенче партин пуçламӑш организацийӗсем, кандидатсен групписем тата уйрӑм коммунистсем хӑйсен ӗçӗсене вӑрçӑ вӑхӑтне тивӗçлӗ пек туса пыма тытӑнчӗç.

Партин Уйкас-Юнтапа ялсоветӗнчи пуçламӑш организацийӗнчи коммунистсем çӗршыва, тӑван Хӗрлӗ Çара пулӑшас тӗлӗшпе лайӑх ӗçлеççӗ. ВКП(б) членӗ П. Шумилов юлташ ертсе пыракан ялсоветӗнчи колхозсем хуçалӑх ӗçӗсене пысӑк ӑнăçлӑхпа вӑхӑтра туса пыраççӗ. Ялсовет финанс планне кварталтан квартала тултарса пырать. СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи налог çинчен кӑларнӑ Указа кашни колхозрах ӑнлантарса панӑ. Партиллӗ-агитациллӗ ӗçе вӗсем хӑйсемпе пӗрле комсомолецсене явӑçтарнӑ.

— Нумаях пулмасть, — тет Кушар Юнтапари Каганович ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ коммунист Н. Ильин юлташ, — эпир хамӑрӑн колхозниксен пухӑвӗнче вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи налог çинчен ӑнлантарса патӑмӑр. Кун хыççӑн колхозниксем извещени алла паричченнех вӑрçӑ налогне аванс шучӗпе 20 пин тенкӗ ытла тӳлерӗç.

Ильин юлташ колхоз председателӗ çеç мар, тата активлӑ агитатор та пулса тӑрать. Вӑл колхозниксен пухӑвӗнче час-часах политикӑллӑ ыйтусем тӑрӑх пысӑк докладсем туса парать. Çапла политикӑллӑ ыйтусене хуçалӑх ӗçӗсемпе çирӗп çыхӑнтарса пынипе колхоз 1941 çулти ялхуçалӑх ӗçӗсене вӑхӑтра вӗçлерӗ, государство умӗнчи обязательствӑсене ӑнăçлӑн татрӗ.

Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнӑ тӗле колхозниксем паттӑр воинсем патне 10 посылка — пӗтӗмпе 55 килограмм тулӑ сухарийӗ, 6 килограмм типӗтнӗ аш, 2 килограмм çу тата 20 килограмм махорка янӑ. Çак ырӑ ӗç çинчен районри «Коммунизм ялавӗ» хаçатра статья пичетленсе тухрӗ. Районри колхозниксем çак пaха ӗçе часах харпӑрхӑй колхозӗсенче пуçарса ячӗç. Калининӑри «Искра» колхоз колхозникӗсем 60 килограмм тулӑ сухарийӗ, 20 килограмм печени, Çӗньялти «Правда» колхоз колхозникӗсем 50 килограмм сухари, 30 килограмм аш, çавӑн пекех ытти колхозсенче те паттӑр воинсем валли паха кучченеçсемпе парнесем ячӗç.

Çавалкасси ялсоветӗнчи партин кандидачӗсен группине ВКП(б) членӗ, ялсовет исполкомӗн председателӗ Г. Емельянов юлташ ертсе пырать. Кашни коммунист кунта колхоз производствинче активлӑн ӗçлет. А. Емельянов коммунист «Сутталлă» колхоз председателӗ пулса ӗçлет. Вӑл хӑйӗн колхозникӗсене тӑван çӗршыва, фронта пулӑшас тӗлӗшпе лайӑх ертсе пырать. Колхозниксем çуракине япӑх мар хатӗрленеççӗ. Емельянов юлташ колхозниксене Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем чӗнсе каланине ӑнлантарса панӑ. Çакӑн хыççӑн колхозниксем çуракине хатӗрленес ӗçе нумай хут вӑйлатрӗç. Бригадӑсем, колхозниксем ӗçре социализмлӑ ӑмӑртӑва аллӑн сарса ячӗç. Колхоз кӗске вӑхӑтрах 275 центнер çуртырри вӑрлӑхӗсене тасатса сортларӗ. Пӑрса вӑрлӑхне колхозниксем алӑпа суйларӗç. 18 центнер кӗл пухрӗç. Ялхуçалӑх машинисемпе транспорт инвентарӗсене тата кӳлмелли хатӗрсене юсама тытӑннӑ.

Пюкрейри «Самолет» колхоза коммунист Н. Матросов юлташ ертсе пырать. Колхозниксем хушшинчи политикӑллӑ-массӑллӑ ӗçе кирлӗ пек туса пынипе, колхозӑн ӗçне большевикла йӗркеленипе Матросов юлташ кая юлнӑ колхоза мала кӑларчӗ. Халӗ колхоз çуртырри вӑрлӑхӗсене 100 процентчӗпех сортласа хунӑ. 22 плуг, 10 сӳре, 18 урапа, 1 сеялка, 2 бестарка юсаса лартнӑ. Уя 900 лав тислӗк кӑларнӑ; 60 центнер кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ, 30 центнер кӗл, 30 центнер фекали пухнӑ, 45 гектар çине щитсем лартса юр тытнӑ. Колхоз çуракине хатӗрленес тӗлӗшпе Кадеркинӑри «Молния» колхозпа ӑмӑртса ӗçлет.

Е. ВОРОБЬЕВ.

Çамрӑксем—комсомол ретне

ЕТĔРНЕ. Вӑрçӑ пуçланнӑранпа комсомолӑн районри пуçламӑш организацийӗсем çамрӑксене комсомол ретне илес тӗлӗшпе чылай ӗçлерӗç. Алексеевкӑри «Хӗрлӗ Çӑлтӑр» колхоз çумӗнчи пуçламӑш организацин секретарӗ Ф. Краснов юлташ колхозри çамрӑксемпе час-часах пухусем, каласусем туса ирттерет, вӗсене ВЛКСМ программипе тата уставӗпе паллаштарать. Çапла вара вӗсем вӑрçӑ пуçланнӑранпа 8 çамрӑка Ленинла комсомолӑн ретне илнӗ. Халӗ вӗсенчен чылайӑшӗсем Хӗрлӗ Çар ретӗнче. Вӗсем хушшинче фронтра тӑшмана хирӗç паттӑррӑн çапӑçаççӗ.

— Комсомолец-юлташсем! Эпӗ [illegible] хаяр та тискер тӑшмана хирӗç çапӑçма комсомол билечӗне илтӗм. Комсомолецсен хушшинче [illegible] малти ретре пыраççӗ. Ӗçлӗр, фронт интересӗсемшӗн пӗтӗм вӑйӑрсене хурӑр. Çамрӑксене комсомол ретне илтӗр, — вӗсене большевикла воспитани парӑр, — [illegible]

— Комсомолец-юлташсем! [illegible]

Комсомолӑн Ядрино вӑтам шкулӗнчи пуçламӑш организацийӗ хӑйӗн ретне 11 вӗренекене илнӗ. Нумаях пулмасть вӗсенчен хӑшпӗрисем Хӗрлӗ Çар ретне кайрӗç.

— Мана ленинла комсомол пӑхса ӳстерчӗ. Тусӑмсем! Тӑрӑшса вӗренӗр, тӑван ялӑрсенчи колхозниксем хушшинче ӑнлантарулӑ ӗçе лайӑх туса пырӑр. Вӗсене Хӗрлӗ Çара, тӑван çӗршыва пулӑшма мобилизацилӗр. Эпӗ тӑван çӗршывӑн юлашки юн тумламӗ юлмиччен çапӑçатӑп,—терӗ ученик [illegible]

Шкулти пуçламӑш организаци халӗ те ӗçе лайӑх туса пырать. Комсомолецсем А. Михайлов, П. Соловьев юлташсем юлашки вӑхӑтра хӑйсен вӗренӳри успехӗсемпе [illegible] ӳстерчӗç. Рыбаков, Н. Михайлов комсомолецсем [illegible] колхозникӗсене Совет Информаци Бюровӗ пӗлтерӗвӗсене вулаççӗ, докладсемпе сӑмахсем туса ирттереççӗ.

Районри çамрӑксем комсомола кӗрсе большевикла воспитани илес [illegible] ӳссе пырать. Январь уйӑхӗнче [illegible] çамрӑксене комсомола илнӗ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Комсомолецсем çуракине хатӗрленес ӗçре

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Ямашкасри «Красное Сормово» колхоз колхозникӗсем çуракине хатӗрленеççӗ. Колхозниксем çуракине хатӗрленес ӗçре комсомолецсем пулӑшаççӗ.

Кунта улпӑм комсомолецсене бригадӑсем çумне çирӗплетнӗ.

П. Петров комсомолец колхозра ӗне фермине ӗçлет. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетӳ [illegible] ӳстерес ӗçре пысӑк тӑрӑшулӑх кӑтартать. [illegible] Петров юлташ [illegible]

[illegible]

Çамрӑк комсомолецсем Картавова çара туса кайнӑ В. Яковлев вырӑнне бригадир пулса ӗçлеме уйӑрнӑ. Бригадир пулма пуçланӑранпа вӑл [illegible]

[illegible]

С. НИКОЛАЕВ.

ÇАМРӐК ПАТРИОТСЕМ

КУСЛАВККА. Комсомолец Манохин юлташ 1941 çулта ФЗО шкулӗнчен III разрядри токарь специальноçне илсе вӗренсе тухнӑ.

Январь уйӑхӗнче вӑл комбинатри пӗр цехра ӗçлеме тытӑннӑ. Манохин юлташ ӗçре хӑйӗнчен аслӑ рабочисен-стахановецсен опычӗпе интересленет, вӗсенчен вӗренме тӑрӑшать. Çакӑ вара çамрӑк патриота ӗçе хӑвӑртрах хӑнăхса çитме пулӑшнӑ. Часах вӑл нормӑна ытлашшипех тултарса ӗçлеме тытӑннӑ. Февралӗн 6-мӗшӗнче вӑл нормӑна 175 процент тултарнӑ. Февралӗн 7—8-мӗшӗнче 200 процента çитнӗ. Февралӗн 1[illegible] [illegible]ӗнчен пуçласа вара ялан шенер нормӑран ытла тултарса пырать. Хӗрлӗ Çар 24 çул тултарнӑ тӗле вӑл 3-шер норма тултарса ӗçлеме пулнӑ, хӑйӗн сӑмахне халь ӗçпе çирӗплетсе парать.

Унӑн тӗлне çамрӑк токарь Макарычев юлташ двухсотник пулма обязательство илнӗ. Макарычев юлташ хӑйӗн обязательствине чыслӑн пурнӑçа кӗртнӗ. Вӑл яланах 2,5 норма тултарса пырать.

Манохинпа Макарычев юлташсенчен çамрӑк токарь Климашенский юлташ та юлмасть. Вӑл та ӗçре аван тӗслӗхсем кӑтартать.

Т. Н.

Красноармеецсен çемьисемшӗн тӑрӑшаççӗ

Совет воинӗсем отечественнӑй вӑрçӑ фронтӗсенче тӑшмана хирӗç паттӑррӑн та хӑюллӑн çапӑçаççӗ, фронтӑн анлӑ талккӑшӗнче тӑшмана çӗмӗрсе каялла хӑвалаççӗ. Ирӗклӗхшӗн, чыслӑхшӑн пыракан çапӑçура совет халӑхӗ хӑйӗн геройла воинӗсене вӑйлӑн пулӑшса тӑрать.

Халӑх хӑйӗн фронтри ывӑлӗсене вӗçӗмсӗр юратать. Чӗререн, ӑшӑ кӑмӑлтан вӗсем патне парнесем ярать, вӗсене ӑшӑ тумтирсемпе тумлантарать, вӗсен çемьисем валли лайӑх пурнӑç условийӗсем туса парассишӗн тӑрӑшать.

Отечественнӑй вӑрçӑн малтанхи кунӗсенчех ССР Союзӗн Верховный Совет Президиумӗ красноармеецсен çемьисене пособи парасси тата çав пособие памалли йӗрке çинчен Указ кӑларчӗ. Çав Указ тӑрӑх, Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи çӗршер красноармеец çемьисем государствӑран пособи илсе тӑраççӗ. Отечественнӑй вӑрçӑ пуçланнӑранпа паянхи куна çитиччен красноармеецсен çемьисене районӗпе пурӗ 357.000 тенкӗ пособи панӑ. Красноармеец Е. Мочалов çемьи кӑна çак вӑхӑтра 940 тенкӗ пособи илнӗ.

Хӗрлӗ Çар боецӗсен çемьисем çине сталинла пӑхни государство пособи панинче çеç мар курӑнса тӑрать. Çӗршывӑн ирӗклӗхӗшӗн, чыслӑхӗшӗн, малашлӑхӗшӗн паттӑррӑн çапӑçакан хӗрлӗ воинсен çемьисене халӑх пур енӗпе те ӑшшӑн пӑхса усрать.

Сӗнтӗрвӑрринчи судоверфь директорӗ, хула Совечӗн депутачӗ Жилочкин, районри промкомбинат управляющийӗ Сигаев юлташсем Хӗрлӗ Çар ретне тӑнӑ работниксен çемьисене куллен пулӑшса тăраççӗ. Çав çемьесене пурне те йӳнӗ хакпа вутӑ илсе, турттарса панӑ, вӗсен пурнӑç ыйтӑвӗсене çийӗнчех тивӗçтерсе пыраççӗ.

Хӗрлӗ Çарӑн боецӗсен çемьисем колхозсенчен те çирӗп пулӑшу илсе тӑраççӗ. Шуршӑл ялсоветӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз членӗн А. Табаков юлташӑн, хӑй Хӗрлӗ Çара кайнӑскерӗн, виçӗ пӗчӗк ачине пӑхса усрассине колхоз хӑй çине илнӗ. Ӗçлес çул тухнӑ ватӑ колхозникӗн П. Белов юлташӑн икӗ ывӑлӗ Хӗрлӗ Çар ретӗнче тӑшмана хирӗç хастаррӑн кӗрешеççӗ. Халӗ П. Белов колхозникe колхоз хӑйӗн пӗрлешӳллӗ кассинчен пулӑшу парса тӑмалла тунӑ.

Новински ялсовет исполкомӗн пуçарӑвӗпе районри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз красноармеецсен ачисем валли яланах ӗçлекен ясли организациленӗ. «Кооператор» артельре ӗçлекен красноармеец арӑмӗсен ачисем артель çумӗнче организациленӗ ача садӗнче усранаççӗ. Кун пек ялан ӗçлекен ача сачӗсене районра 5 çӗрте уçнӑ. Вӗсенче пурӗ 155 ача пурӑнать.

Красноармеецсен арӑмӗсем валли ӗçе тӑма предприятисен, колхозсен, совет учрежденийӗсен, артельсен алӑкӗсем ярах уçӑ. Çӗршер хӗрарӑмсем, вӑрçӑ пуçланнӑ хыççӑн, фронта кайнӑ юлташсен вырӑнне ӗçе тӑчӗç.

Хӗрлӗ Çар воинӗсен çемьисене халӑх хушшинче ӗçлекен агитаторсем те пысӑк пулӑшу парса тӑраççӗ. Елистратова, Агельская, Воинова юлташсем ертсе пыракан агитгруппӑсем хӑйсен участокӗсенчи красноармеецсен çемьисем патӗнче пулчӗç. Кашни çемьерех вӗсене чӗререн савӑнса кӗтсе илчӗç, калаçрӗç, хӑйсен пурнӑç ыйтӑвӗсене каласа пачӗç. Çак тӗлпулу агитаторсем умне нумай çӗнӗ ыйтусем кӑларса тӑратрӗ.

Коммунистка Моргенштерн юлташ агитатор пулса ӗçлет. Сентябрь уйӑхӗнчен пуçласа вӑл Сорокина юлташ патне тӑтӑшах çӳрет. Фронта кайнӑ Сорокин юлташӑн 5 ача. Унӑн арӑмӗ — Сорокина — «Портной» артельре ӗçлет. Арçын ачин пальто çук пулнӑ. Моргенштерн юлташ кун çинчен артель заведующийӗпе, месткомӗпе калаçнӑ. Артель ача валли пальто çӗлесе пама май тупрӗ. Килте вутӑ пӗтнӗ. Агитатор Моргенштерн çу ыйтӑва та татса пама пулӑшнӑ. Красноармеец Сорокин çемьи хӑйӗн пурнӑçӗнче агитаторӑн ӑшӑ пулӑшӑвне туйса тӑрать.

Çакӑн пек тӑрӑшмалла красноармеецсен çемьисемшӗн. **Л. ВИГДОРЧИК.**

Ӗçри çӗнӗ шухӑшсем

ИЕПРЕÇ. Инвалидсен «Помощь» промартелӗ ытти промышленность предприятийӗсем пекех Хӗрлӗ Çар валли йӗлтӗрсем тума васкавлӑ заказ илнӗ пулнӑ. Анчах артель членӗсем хушшинче халиччен йӗлтӗрсем тунӑ çынсем пӗрре те пулман. Çӗнӗ ӗçе ӑнланса илсе ӑна йӗркелесе ярасси питех те ответлӑ задача пулнӑ. Артель правленийӗ, нумай шухӑшласа тӑмасӑрах, çак ӗçе организацилеме 70 çулти ватӑ рабочи Федорчуков юлташа хушнӑ. Федорчуков хӑйӗн ӗмӗрӗнче сахал мар йывӑрлӑхсем курнӑ, вӑл йывӑрлӑхсенчен нихӑçан та хӑраса тӑман. Халӗ те ватӑ патриот пӗр самант шухӑшласа тӑнӑ хыççӑн çапла каланӑ:

— Хальхи вӑхӑтра йӗлтӗрсем Хӗрлӗ Çара питех те кирлине эпир пурте лайӑх пӗлсе тӑратпӑр, çавӑнпа та хамӑра панӑ задание эпир пурнӑçлатпӑрах, — тенӗ. Çав кунах вӑл ӗçе тытӑннӑ. Каткапичке тӑвакан цехран Глякин, Монахов, Лягалин, Шишкин юлташсене чӗнсе илсе, вӑл йӗлтӗрсем тӑвас ӗçе пуçарса янӑ.

Вӑхӑт пӗр эрне те иртмерӗ, пaха йӗлтӗрсем тухма та пуçларӗç. Халӗ ӗнтӗ çӗнӗ цехра ӗçлекенсен йышне ӳстерес ыйту тухса тӑчӗ. Колхозсенчен çӗнӗ çынсене йӗлтӗрсем тӑвас ӗçе вӗрентме илчӗç. Федорчуковпа унӑн юлташӗсем колхозран пынӑ çынсене йӗлтӗр тума вӗрентеççӗ. Халӗ ку цехра чылай çынсем ӗçлеççӗ. Глякин, Монахов, Шишкин, Лягалин юлташсем сменӑри нормӑна куллен ирттерсе тултараççӗ.

Колхозник С. Мамонтов юлташ та ӗçре паха тӗслӗхсем кӑтартать. Вӑл икӗ çын туса хатӗрлекен детальсене пӗччен туса пама ӗлкӗрет.

Цех бригадирӗ Федорчуков юлташ йӗлтӗр тӑвакансене çӗнӗ ӗçӗн майӗсене вӗрентет. Ӗç ӑнăçлӑн малалла кайса пырать. Продукци туса кӑларасси те кунран-кунах ӳсет.

Çӗршыва кирлӗ васкавлӑ заказсем вӑхӑта кӗтмеççӗ. Ӗç фронтӗнчи патриотсем, фронта кайнӑ вӑйпитти арçынсем вырӑнне тӑнӑ хӗрарӑмсем, ватӑ çынсемпе çамрӑксем васкавлӑ заказсене большевикла пурнӑçласа пыраççӗ. Двухсотниксен йышӗ ӳсех пырать.

«Кооплеспром» промартельре васкавлӑ заказсене пурнӑçланӑ çӗрте чылай двухсотниксем ӳсрӗç. Фрезеровщица М. Бакарева юлташ кулленхи нормӑна 200 процентран ирттерсе тултарать. А. Иванова, Черенков, Лысков, Баласов юлташсем хӑйсен пархатарлӑ ӗçӗсемпе юлашки вӑхӑтра двухсотниксен ретне тӑма тивӗçлӗ пулчӗç.

Çавнашкал патриотла хӑват çӗклени-нипе пӗрлех творчествӑллӑ шухӑш, изобретательство, рационализаци вӑйланса пырать. Паллӑ стахановец-рационализаторсем Синяковпа Цареградцев Хӗрлӗ Çар валли кирлӗ çӗнӗ хатӗр туса кӑларас ӗçе хӑвӑрт алла илсе, ӗçе çамрӑк рабочисене вӗрентме тытӑнчӗç. Халӗ вӗсем çӗнӗ детальсене 300 штука ытла туса хатӗрленӗ.

Промартель йӗлтӗрсем туса кӑлармалли январь уйӑхӗнчи плана 125 процент ытла пурнӑçларӗ.

В. АНДРЕЕВ.

Колхоза кӗреççӗ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Анат Тӑрмӑш ялсоветӗнчи Ленин ячӗпе тӑракан колхоза 2 хуçалӑх, Шурутри «Правда» колхоза çӗнӗрен тата 4 хуçалӑх кӗчӗç.

Çӗнӗ колхозниксем ытти колхозниксемпе пӗрле çуракине хатӗрленнӗ çӗрте ӗçлеççӗ.

И. МИТРОФАНОВ.

Çӗнӗ кадрсем

ИШЛЕЙ. МТС пуçарнипе Ишекри Сталин ячӗпе тӑракан колхозра агротехникӑна вӗренмелли курс уçӑлнӑ. Ӑна колхозри агроном Н. Илюхина юлташ ертсе пырать. Унта колхозниксем, çамрӑксем, комсомолецсем, комсомолкӑсем—пӗтӗмпе 35 çын вӗренеççӗ.

И. МАРКОВ.

Чӗпӗ кӑлармалли чӑхсене тӑрантарасси

Чӑх çӑмарта лайӑх тӑвасси йӑхран йӑха куçса пырать. Çавӑнпа та чӗпӗсем кӑларма инкубатора çӑмарта лайӑх тӑвакан сывӑ чӑхсен çӑмартисене хурас пулать. Чӑхсем сывӑ мар пулсан, вӗсен çӑмартисем те чӗпӗ кӑларма юрăхлӑ пулаймаççӗ. Ку тӗлӗшпе нимрен ытла чӑхсем шурӑ варвиттипе, авитаминозӑпа чирлӗ пулассинчен хытӑ асӑрхамалла. Авитаминозӑпа тата чахоткӑпа чирленӗ чӑхсен çӑмартисенчен вӑйсӑр, сывлӑхсӑр чӗпсем тухаççӗ, вӗсем çитӗнсессӗн те çӑмарта лайӑх тӑвакан чӑхсем пулмаççӗ. Авитаминозӑллӑ чӑхсен çӑмартисем тата пуринчен ытларах тӑрӑ пулаççӗ, чӗпсем çӑмарта ăшӗнчех пухăймасӑрах чылай вилеççӗ, тухакансем те тӗрексӗр пулаççӗ. Авитаминоза чирӗ чӑхсене тӗрӗс пӑхса тӗрӗс тӑрантарманнинчен, çитерекен апатра витамин çукран е сахал пулнӑ пирки пулать.

Колхозсенчи кайӑк-кӗшӗк фермисем чӗпсем кӑларнӑ вӑхӑтра чӑх çӑмартисене инкубаторсене ярса тӑраççӗ. Çав çӑмартасем чӗп кӑларма пур енчен те лайӑх пулччӑр тесен, чӑхсене хӗллех лайӑх пӑхса тӗрӗс тӑрантарас пулать.

Чӑхсем пурӑнакан çурт типӗ, таса, çутӑ пулмалла, сывлӑшӗ уçӑ пултӑр. Нӳрӗк, пӑчӑ, тӗттӗм, таса мар çуртра чӑхсен сывлӑхӗ начарланать. Çуртӗ тӑвӑр ан пултӑр. Кашни 3—4 чӑх пуçне урай пӗр тӑваткӑл метр кирлӗ. Сывлӑш таса тӑма пӑсӑк сывлӑша туртса тӑракан труба кирлӗ.

Чӑхсем пурӑнакан çурта, вӗсем ларакан каштасене, йӑвисене, апат-çимӗç паракан япаласене таса тытмалла. Кашни кун вӗсене шӑлса-хырса тасатмалла, вӗсен тислӗкне пӗр вырӑна кӑлармалла. Урайне саракан улăма кашни кун сенӗкпе силлесе, лайӑххине хӑвармалла, юрăхсӑррине тула кӑларса тӑкмалла. Улӑма эрнере пӗрре пӗтӗмпех улӑштармалла.

Ӑшӑ лӑпкӑ кунсенче чӳречесене уçса уçăлтармалла, чӑхсене хӑйсене те тула кӑларса ямалла.

Чӑхсем чирлесен, çийӗнчех чирлӗ чӑхсене сыввисенчен уйӑрмалла. Чӑхсем чирле пуçласан, часрах выльӑх тухтӑрне кӑтартас пулать. Вилнӗ чӑхсене шӑтӑкан та çуртра выртарас пулмасть, çийӗнчех çунтарса ямалла.

Чӑхсене пыйтӑсем нумай сиен тӑваççӗ, вӗсене начарлатаççӗ. Пыйтисене тасатма чӑхсене ещӗкпе тусан, хӑйӑр, кӗл лартса параççӗ.

Тырӑллӑ апатран пуçне чӑхсене тымарçимӗç, курӑк апат тата минерал апачӗсем кирлӗ. Тымарçимӗçре, курӑк апатра витамин пур. Чӑхсене хӗлле выльӑх кăшманӗ, кишӗр, купӑста, типӗтнӗ вӗлтрен, шӑтарнӑ сӗлӗ, урпа параççӗ.

Шӑтарнӑ сӗлӗ чӑхсемшӗн питӗ аван апат. Чирлӗ чӑхсене уйрӑмах шӑтарнӑ сӗлӗ парас пулать. Сӗлле çапла шӑтараççӗ. Ӑна вишре-катка çине тултараççӗ те шыва икӗ талӑк шӳтереççӗ. Унтан лутра ещӗк çине 4—5 сантиметр хулӑнӑш сараççӗ, ӑшӑрах çӗре лартаççӗ, кунне иккшер хут шыв пӗрӗхеççӗ. 7—10 кунтан калча 10—15 сантиметр çӳллӗш çитӗнет, ӑна вара чӑхсене çитереççӗ. Шӑтарнӑ сӗлӗ часах шанать, çавӑнпа та ӑна хӑвӑртрах çитерме кирлӗ.

Шӑтарнӑ сӗлле чӑхсене кунне пӗр хут параççӗ, кашни чӑх пуçне 6—8 кубла сантиметр калча çитет. Çапла тӑрантарсан апат пит перекетлӗ пулать. 40 килограмм сӗлӗрен 145 килограмм таран шӑтарнӑ сӗлӗ пулать.

Сӗлӗ шӑтарма ӑрасна вырӑн тӑваççӗ. Унӑн çӳллӗшӗ 2 метр пулмалла. Унта 7 ещӗк вырнаçмалла (кашни кун валли пӗр ещӗк), тӑваткӑл ещӗксен кашни енӗ 60 сантиметр пулмалла. Çав ещӗксене çайлӑ-çиллӗ вырнаçтараççӗ. Çапла пӗр ещӗк çинчи калчине çисе янӑ çӗре тепӗр ещӗкӗ çинче сӗлӗ шӑтса çитӗнсех тӑрать.

Чӑхсене аш-какай, пусӑ выльӑх юнне, ӑшчик тавралӑхне, шӑммине парсан аван. Юна кӗвӗлтерсе хурса, кайран ӑна вӗри шывпа ислетсе пӑтратнипе хутӑштарса параççӗ, е кӑмакара çатма çинче типӗтсе тӳсе параççӗ. Выльӑх ӑшчиккине пӗçерсе тӳсе пӑтратнипе хутӑш параççӗ. Шӑмма чӗрӗлле авӑртса е типӗтсе тӳсе параççӗ. Чӑхсене аш-какай апачӗ пӗтӗм апат шутӗнчен 10—15 процент памалла.

Минерал апатсенчен чӑхсене вӗтӗ чул, известь кирлӗ, кӑмрӑк та вырӑнлӑ. Çак япаласене чӑхсем умӗнче яланах тулӑх тытмалла. Кӑмрӑка, извеçе, çӑмарта хуппине тӳсе çӑнӑх туса параççӗ.

Чӑхсене çапла пӑхса тӑрантарсан, вӗсенчен çӑмартасем нумай илме пулать тата çӑмартисем те шултра та сывӑ пулаççӗ. Чӗпӗсене шӑпах ӗнтӗ çавнашкал çӑмартасенчен кӑлармалла.

Н. АНДРЕЕВ.

Выльӑхсен йышӗ ӳсет

ÇĔМĔРЛЕ. («Чӑваш Коммуни» корр.). Турханти «Комбинат» колхоз выльӑх-чӗрлӗх йышне ӳстерес тӗлӗшпе аван ӗçлет. План тӑрӑх кăçалхи январӗн 1-мӗш тӗлне колхоз фермисенче 135 ӗне, 90 сысна пулмалла пулсан, паянхи куна унта 146 ӗне, 92 сысна шутланать. Колхозӑн тата чӑх-чӗп, сурӑх фермисем пур, вӗсенче те плана тултарнӑ.

Фермӑсенче ӗçлекен арçынсем фронта тухса кайрӗç, теприсем тата урӑх ӗçе куçрӗç. Ӗлӗкрех ферма заведующийӗнче Макаров, бригадирта Г. Ермолаев, учетчик пулса Цветков тата чӑх-чӗп фермине П. Петров ӗçленӗ. Цветковпа Петров юлташсем фронта кайрӗç, Макаровпа Ермолаев юлташсене урӑх ӗçе куçарчӗç. Вӗсен вырӑнне фермӑна çӗнӗ çынсем килчӗç. Вӗсем ӗçе тытӑннӑранпа ӗç япӑхма мар, татах те лайӑхланма пуçларӗ. Колхозницӑсем ытларах тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Петрова юлташ фермӑсене ертсе пынипе пӗрлех учет ӗçне те хӑех туса пырать. Дарья Герасимова кӑнтӑрла путексене пӑхать, каçхине колхоз пурлӑхне сыхлать.

Вера Миронова фермӑра 12-мӗш çул ӗçлет. Халь вӑл доярка, иртнӗ çулта хӑйне çирӗплетсе панӑ ӗнесенчен 14.144 литр сӗт суса илнӗ. Кунсӑр пуçне тата вӑл 10 пӑру пӑхса ӳстернӗ.

— Вӑл пирӗн пур ӗçе те пултарать, чирленӗ выльӑх-чӗрлӗхе те хӑех сыватать,—теççӗ ун çинчен колхозниксем.

Пӗр вӑхӑтра «Валушка» ӗне сасартӑк чирлесе кайнӑ, выльӑх тухтӑрӗ патне илсе кайма май пулман. Миронова юлташ чирлӗ ӗнене хӑех кирлӗ пулӑшу панӑ, ӑна пӑхма та хӑй çине илнӗ. Çапла вара, вӑл ӗнене хӑех сыватнӑ.

Вера Мироновӑн ӗçне колхозниксем хаклаççӗ, ырлаççӗ. Лайӑх ӗçленӗшӗн ӑна колхоз правленийӗ пӗрре мар парнесем панӑ.

Вера Мироновӑн юлташӗсем Мария Мигушовӑпа Анна Данилова колхозницӑсем те ӗçре пример кӑтартаççӗ. Иккӗшӗ те фермӑра чылайранпа ӗçлеççӗ, вӗсен айӑпӗпе выльӑхсем вилни е аманни пӗре те пулман. Данилова фермӑна ӗçлеме килнӗренпе 150 пӑру ытла пӑхса ӳстернӗ. Халӗ вӑл 31 пӑру пӑхать. Вӗсем пурте ӑшӑ та çутӑ пӳлӗмсенче пурӑнаççӗ. Данилова пӑрусене вӑхӑтра апат парать, вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе уçăлтарса çӳретет.

«Комбинат» колхозри выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗçлекенсем отечественнӑй вӑрçӑ вӑхӑтӗнче чӑн-чӑнах хастарлӑ ӗçлеççӗ. Вӗсенче иртнӗ çулта лайӑх результатсем кӑтартнӑшӑн ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ колхозниксене ӗçшӗн хушса тӳлемелли çинчен йышӑннӑ постановлени тӑрӑх 5 сынна ӗçшӗн хушса тӳлемелле тунӑ. Кăçал вӗсем татах та лайӑхрах ӗçлеме пулчӗç.

Х. ЛИСИН.

* * *

ИЕПРЕÇ. Чылай колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе иртнӗ çул пысӑк çитӗнӳсем турӗç. 1940 çултипе танлаштарсан, 1941 çулта районӗпе выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана мӑйракаллӑ шултӑра выльӑхсем енӗпе 117 процент, сыснасем енӗпе 149 процент, сурӑхсем енӗпе 122 процент тултарнӑ. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана пур выльӑхсем енӗпе те ирттерсе тултарнӑ колхозсем районра халь сахал мар ӗнтӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх продуктивноçӗ те палӑрмаллах ӳсрӗ. Кашни сӑвакан ӗнерен вӑтамран 1100 литр сӗт суса илмелле пулнӑ пулсан, «Осоавиахим» колхозри Е. Романова доярка кашни ӗнерен—1727 литр, «Победа» колхозри Мария Кузьмина—2000 литр сӗт суса илнӗ. Ытти выльӑхсен продуктивноçӗ те чылай ӳснӗ. Сӑмахран, «Большевик» колхозра А. Данилова кашни сурӑхран 2—3 килограмм çӑм илес вырӑнне 5 килограмм таран çӑм илме пултарнӑ, «Искра» колхозри чӑх-чӗп фермин-че ӗçлекенсем кашни чӑхран планпа 70 çӑмарта илме палӑртнӑ, вӗсем 108 çӑмарта илнӗ.

Çакнашкал паха примерсемпе пӗрлех, выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес енӗпе начар ӗçлекенсем те çук мар-ха. «Заря» колхозра кашни сӑвакан ӗнерен çулталӑкне пурӗ те 101-шер литр çеç сӗт суса илнӗ. «Красная нива», «Красный партизан», «Искра» колхозсенчи фермӑсенче те ӗнесенчен сӗт пачах çителӗксӗр суса илеççӗ.

Кунпа пӗрлех выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана та иртнӗ çул уйрӑм колхозсенче тултараймарӗç. Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес плана тултарайман колхозсенче нимӗренрен малтан çамрӑк выльӑхсене пӑхса çитӗнтерес ӗç начар пулса пырать. Сысна витисенче сивӗ тата таса мар пулнӑ пирки «Чувашия» колхозра нумай сысна çурри вилнӗ. «Мопр», «Заря» колхозсенче пӑрусене хупса усрама уйрӑм пӳлӗмсем туса паман пирки пӑрусене колхозниксен килӗсенче усраççӗ. Выльӑх апачӗ те çав колхозсенче çителӗклӗ хатӗрлемен, пур пек апатсене те тирпейлӗ тыткаламаççӗ, выльӑхсене тӑрантарас ӗçре йӗркелӗх сахал.

Иепреç районӗнче йышлӑ тата тухăçлӑ выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетме пур условисем те пур. Çавна ӗнтӗ районри малта пыракан колхозсенчи фермӑсем кӑтартса параççӗ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Мухтанмалли çук

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Хамӑр корр.). Районри çутӗç пайӗн заведующийӗ Д. Павлов юлташ вӗренӳ çулӗн пӗрремӗш çулçулӗнчи итогсем çинчен çырнӑ отчет çине пӑхса ларать.

Анчах унӑн итогсенче мухтанмалли нимӗн те курӑнмасть. Çапах та Павлов юлташ отчетне илемлетес шутпа: «иртнӗ çулхисемпе танлаштарсан, вӗренӳ пахалӑхӗ чылай ӳсрӗ» тесе çырнӑ. Лайӑх ӗçлекен шкулсен хисепне Хурамал-Туçари пуçламӑш шкула, Нарат-Чакинчи туллимар вӑтам шкула тата Çатракассинчи вӑтам шкула кӗртнӗ.

Тӗрӗссипе илсен, çак асӑннӑ шкулсене лайӑх ӗçлекен шкулсен хисепне мар, начаррисен хисепне кӗртмелле. Мӗншӗн тесен вӑл шкулсенче вӗренӳ пахалӑхӗ те, шкула çӳресси те тивӗçлӗ вырӑнта мар. Çатракассинчи вӑтам шкулта вӗренӳ программине 1-мӗш çурçуллӑхра пӗтӗмпе те 79,3 процент çеç тултарнӑ.

Павлов юлташ начар ӗçлекен шкулсене лайӑх ӗçлекен шкулсен хисепне кӗртсе мухтанма пӑхать. Анчах та фактсене пытарма çук. Районри шкулсем кăçалхи вӗренӳ çулӗн 1-мӗш çурçуллӑхӗнче, иртнӗ çулхипе танлаштарсан, чылайӑшӗ начар ӗçлерӗç. Çакна эпир шкул çулне çитнӗ ачасенчен 253 ачана шкула явӑçтарманнинчен, 787 ача вӗренӳ çулӗ пынӑ вӑхӑтра вӗренме пӑрахнинчен, ачасем вӗренӳре ӗлкӗрсе пырасси 81,9 процент тата ачасем шкула çӳресси 87,8 процент çеç пулнинчен аван куратпӑр.

Районри шкулсене çутӗç пайӗ те, ӗççынни депутачӗсен вырӑнти совечӗсем те, колхозсем те кирлӗ пек пулăшса пыман. Çавна пула Энтриш-Пасарӗнчи, Кӗчкейри туллимар вӑтам шкулсем тата ыттисем те чылай вӑхӑт хушши вутӑсӑр ларнӑ. Паллах ӗнтӗ, сивӗ шкулта вӗренӳ пахалӑхӗ те, ачасем шкула çӳресси те начар пулать.

Инçетри ялсенчен çӳрекен ачасем валли шкул çумӗнче интернат пулмалла. Интернатсем уйрӑмӑнах вӑтам шкулсем çумӗнче питӗ кирлӗ. Анчах та Октябрьски районри шкулсем интернатсем хатӗрлемен. Ку ӗнтӗ ӗçре пысӑк чӑрмав пулса тӑрать. Хуракассинчи тата Октябрьскинчи вӑтам шкулсенче вуншар ача вӗренме пӑрахни те интернатсем çуккинчен чылай килнӗ.

Районри шкулсен вӗренӳ çулӗн 2-мӗш çурçуллӑхӗнче хӑйсен ӗçӗсене вӑрçӑ вӑхӑчӗ хушнӑ пек урӑхлатса çӗнетмелле. Павлов юлташӑн та вӗренӳ çулне ӑнăçлӑн вӗçлессишӗн тӑрӑшмалла.

Г. ПЕТРОВ.

Риомри процесс

ЖЕНЕВА, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). Ĕнер, Клермон-Ферран çывăхĕнчи Риом ятлă пĕчĕк хулара (оккупациленмен Францире) Францин премьер-министрĕсем пулнă Даладьепе Леон Блюма, авиацин министрĕ пулнă Ги Ла Шамбра, Францин генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Гамелена тата çарăн генеральнăй инспекторĕ пулнă Жаконэне суд тума пуçланă. Кунсăр пуçне, айăпланаканнисен списокĕнче авиацин министрĕ пулнă Пьер Кот пур. Âна хăйсĕрех суд тăваççĕ, мĕншĕн тесен вăл халĕхи вăхăтра Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче пурăнать. Нумай хисеплĕ свидетельсем хушшинче Францин премьер-министрĕ пулнă Рейно, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Мандель, ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Жорж Боннэ, генералсем Вейганпа Жорж Карап пур.

Çав процесс гитлеровецсем Францие тытса илнин чăн-чăн обстоятельствисене пытармашкăн Берлинран тӳррĕн панă приказ тăрăх тăвакан судăн ăнăçсăр камичĕ пулса тăрать. Процесс питĕ çивĕчленсе çитнĕ обстановкăра пулса иртет. Франци общественноçĕн представителĕсене суд ларăвĕн залне кĕртмен. Виши правительстви, халăха демонстрацисем, пăлхавсем тума ирĕк парас мар тесе, питĕ хаяр мерăсем йышăннă. Гитлеровецсен приказĕ тăрăх пулса иртекен камит халăха питех те тарăхтарать. Суд çуртне полицейскисен вăйлă отрячĕсем сыхлаççĕ. Риом хулине пырса кĕме чарнă.

Процесăн малтанхи кунĕсенче çакă палăрнă: айăпланаканнисем вăрçă мĕншĕн пуçланса кайнин, Франци мĕншĕн поражени тӳснин чăн-чăн сăлтавĕсене кăтартса пама кирек епле хăтланнисене те судра тытăклăнах пӳлсе пыраççĕ. Вăрçăшăн Германия айăплине асăрхаттарма тăнисене пурне те суд председателĕ çийĕнчех пӳле-пӳле лартать. Тата çакă питĕ паллă вырăн йышăнса тăрать: генерал Гамелен судра хăйне чĕлхесĕр çын пек тытать, эпĕ процесс пĕтиччен те нимĕн те шарламастăп, тенĕ вăл. Çав вăхăтрах Леон Блюмпа Даладье вăрçăра Франци поражени тӳснишĕн Францин верховнăй командованийĕ, уйрăмăн илсен генерал Гамелен ответлă пулнине пур майсемпе те çине тăрсах кăтартса панă. Блюм суд никама пăхăнманни пирки, вăл хăй ирĕкĕпе приговор йышăнма пултарайманни пирки иккĕленсе ыйту кăларса тăратнă.

— Пирĕн кĕрешмелле, çак процесри дебатсенче эпир мĕнпур чăнлăха кăтартса парăпăр,—тенĕ Блюм.

«Мана судра хама тӳрре кăларма ирĕк париччен эпĕ 17 уйăх хушши тĕрмере лартăм,—тенĕ Даладье.—Мана хама тӳрре кăларма ирĕк париччен,— тенĕ вăл,—Вишири пичетпе радио, çавналласах тата Вишин хальхи правительствин пуçлăхĕ те мана, вăрçă пуçласа яраканни вырăнне, вăрçăра поражени тӳснишĕн айăпли вырăнне курса, вараласа пăрахса кăларчĕç. Вăрçăшăн айăплă мар çынсене,—тенĕ вăл,—суд тумашкăн Германи хушнă. Вăрçăшăн Германия айăплă, çак процесра [illegible]

Суд председателĕ Даладье пулăшĕ те, Германия айăпли çинчен Даладье калама [illegible] процесра малалле [illegible] хупса тăрасшăн пулнă.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 20-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат Риом процесĕ çинчен калани çапла çырать: çак процесра айăпланакансене [illegible] Франци [illegible]

ЖЕНЕВА, февралĕн 21-мĕш. (ТАСС). Риомра [illegible]

нă. Даладье Германия истори тăрăшĕнче ютçĕршывсене тытса илнине пăхса тухнă, тата çакă 1934 çулта Францин хĕçпăшалланăсăрланас çул çине тăнине кăтартса панă. Германия çине тăрсах хĕçпăшалланнă вăхăтра Франция 1935 çулччен хĕçпăшалсăрланса пынă. Çав çул Франции çар министрĕ палата çирĕплетсе панă укçа-тенкĕн пĕр пайĕпе çеç усă курнă. Вăрçăра Франция поражени тӳсни,—тенĕ Даладье,—стратегипе тактика тĕлĕшĕнчен тунă йăнăшсен тата Францин çар руководителĕсенчен хăшпĕрисем шухăшкăмăл тĕлĕшĕнчен питĕ аялта тăнин результачĕсем пулса тăраççĕ. Вăрçа туса пынăшăн ответлă çынсене суд тумалла пулнă.

— Çак тенкел çинчен,—тенĕ Даладье,—чи пысăк руководительсем каланă сăмахсене кăтартса парăп, Франци çарĕ вăрçма пултарасси пирки вĕсем нихăçан та иккĕленсе тăман. Мĕншĕн Францие çавтери хăварт çĕнтернĕ? Çĕнтерекенни хăй те çакăн пирки тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. Поражени тӳснишĕн ответлине тупма мĕншĕн чараççĕ. Поражениш ăн кам айăплă? Хăйсен аллинчи пысăк вăйсемпе усă курманнисем, питĕ пысăк çар материалĕсене тылра тытса усранисем пирĕн çар руководителĕсем мар-и вĕсем? Çапăçу пынă вăхăтра машинăсемпе танксене мĕншĕн çавтери сапаласа пĕтернĕ, тылра хĕçпăшал нумай тытса тăнă? Седан патĕнче фронта мĕншĕн татнă?—Малалла Даладье çапла ыйтнă: —Катастрофăн чăн-чăн сăлтавĕсене ăнлантарса памашкăн тивĕçлĕ документсемпе усă курма пире мĕншĕн ирĕк памаççĕ? Чи хаяр çапăçу пынă вăхăтра капитуляци тунă генералсене хӳтĕлесе хăварма мар-и? Ку процесра сăмах республикăн кунçулне чарса лартасси çинчен пымасть-и?—Даладье шантарсах çапла каланă: эпĕ тăван çĕршывшăн хамăн ĕçе тӳрĕ кăмăлпа туса пынă; тăван çĕршывăн ывăлĕсем подлецсем мар, тенĕ.

Даладье защитникĕ Рубэ хăйĕн сăмахĕнче Даладьене айăпласа çырнă акта пăрахăçа кăларса, çĕнĕ следстви тума ыйтнă. 1936 çултан пуçласа 1939 çулти сентябрь уйăхĕччен лару-тăрушăн айăплакипе килĕшнĕ, анчах та 1939 çулти сентябрь уйăхĕ хыççăнхи ĕçсемшĕн те айăплисене шырамалла, мĕншĕн тесен çав вăхăт хыççăн ларутăру татах та ытларах çивĕчленнĕ, тенĕ Рубэ. Лару-тăру вăрçă пуçланнă хыççăн çивĕчленнине нумайĕшсем пĕлеççĕ. Ку ĕнтĕ стратегипе тактика тĕлĕшпе тунă йăнăш, çар руководителĕсен пултарусăрлăхĕ пулса тăрать. Мĕншĕн вĕсене паян суда парасшăн мар? Пире айăпланипе хама пытарса хăварма тăрăшаççĕ?—тесе ыйтнă Рубэ.

Блюм защитникĕ Споньян Рубэ сăмахĕсемпе килĕшнĕ. Споньян Блюма айăпласа çырнă акта пăрахăçа кăларса çĕнĕ следстви тума ыйтнă. Вăрçă пуçланнăшăн ответ тыттарассине Блюм çине тиеме хăтланни нимĕнпе те çирĕпленмест, тесе палăртнă вăл. Вăрçă пуçланнăшăн Франция мĕн чухлĕ ответ [illegible]

[illegible]

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 21-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, [illegible] Пьер Кот [illegible] Риом процесĕ [illegible]

Геббельсăн салхуллă сăмахĕсем

СТАМБУЛ, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). «Дас рейх» хаçатра Геббельс статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл: «вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш хĕле Германи халăхĕ, ытти хĕлсене тӳссе иртернĕ пек мар, урăхла шухăш-кăмăлсемпе тӳссе иртерет, тесе çырать. Геббельс çапла палăртать: Германия вăрçă çăмăл пулать, вăрçă ĕçĕсем Европăра çеç пулса иртĕç тесе шутлани аркатса кайрĕ. «Ĕлĕк,—тесе çырать вăл уççăнах,—вăрçă пире пысăк ĕç пек, анчах хăрушла ĕç пек мар, туйăнатчĕ, халĕ ĕнтĕ ĕç тĕпренех урăхла тăрать. Российăпа хирĕç пуçласа янă поход 8 уйăха тăсăлтчĕ те ĕнтĕ. Çак вăрçăра пулса иртекен хаяр та вăйлă çапăçусем нимĕçсем умне çĕнĕ те йывăр проблемăсем кăларса тăратаççĕ. Çакă ĕнтĕ нимĕç салтакĕсен сăн-сăпачĕ çинче те палăрать, вĕсем халĕ япаласем çине ĕлĕкхи пек мар, урăхла пăхаççĕ. Ĕлĕк çĕнтерӳ пирĕншĕн çепĕç те илемлĕ ĕмĕт пулса тăратчĕ. Халĕ вăрçă пирĕншĕн йывăр испытани пулса тăрать».

Гитлерла хаçат Германин фрончĕпе тылĕ хушшинче хирĕçӳсем пуррине йышăнать

ЖЕНЕВА, февралĕн 21-мĕш. (ТАСС). Гиммлерăн «Дас шварце корпс» хаçачĕ Германин фрончĕпе тылĕ хушшинче хирĕçӳсем пурри çинчен шиклĕн çырать. Хаçат çапла йышăнать: иртнĕ вăрçă вăхăтĕнчи пекех, хальхи вăрçăра та Германи фрончĕпе Германи тылĕ пĕр-пĕринчен ютшăнни палăрать. Тыл фронта пулăшса пымасть, тылра «сăтăрçăсем» питĕ нумай, тесе ӳпкелешет хаçат. Хаçат уйрăмах çак факта кăтартса парать: çĕршывра улшуçла суту-илӳ анлăн сарăлни Германин хуçалăхне дезорганизацилет, çакă ĕнтĕ çĕршывăн экономика тĕлĕшĕнчи ахаль те йывăр положенине татах та йывăрлатса ярать. «Дас шварце корпс» хаçат тĕслĕх вырăнне пĕр усламçă поколадпа ликера граммофонсемпе тата гармоньсемпе улăштарасси çинчен панă пĕлтерĕве илсе кăтартать. Тепĕр усламçă кайăк-кĕшĕке тĕрлĕ таварсемпе, виççĕмĕшĕ—кинофильмсене табакпа т. ыт. те улăштарать. Нумай чухне, тесе çырать хаçат, ремесленниксем какайшăн е сахăршăн çеç ĕçлеççĕ. Гиммлерăн органĕ çавăн пек мĕнпур «сăтăрçăсене» хăратса çырать.

Атлантикăра Германин подводнăй лодкисен активлăхĕ вăйланни

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Лондонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Англин лайăх пĕлсе тăракан çыннисем çапла калаççĕ: Германия Атлантикăн çурçĕр пайĕсенче подводнăй лодкăсемпе пысăк наступлени тума тытăннă. Çапла майпа вăл Америка фронтне Лăпкă океана подкреплени илсе пыма чарса лартасшăн. Çав çынсем каланă тăрăх, февралĕн пуçламăшĕнче Атлантикăн çурçĕр пайĕнче пĕр вăхăтрах Германин 34 подводнăй лодки çӳренĕ.

Виши правительстви нимĕç политэмигранчĕсене гитлеровецсен аллине тытса панă

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). «Дейли геральд» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Виши правительстви нимĕç политэмигранчĕсене, антифашистсене тата республикăллă Испани çарĕн ретĕнче интернациональнăй бригадăн членĕсем пулса кĕрешнĕ çынсене, гитлеровецсен аллине массăллăн тытса пама пуçланă. Францири концентрациллĕ лагерьсенчен пĕринче ларакан çын каланă тăрăх, лагерьтен гестапо кашни кунах темиçешер çын илсе тухса каять. Çапла, сăмахран, рейхстагăн депутачĕсене Франц Далемпа Зигфрид Ределе, Пруссин ландтагĕн депутатне Генрих Рауна тата Германин паллă обществăллă деятелĕсене — Леонгардпа Мильсена гитлеровецсен аллине тытса панă. Çав çынсене виçĕ çул хушши Францири концентрациллĕ лагерьсенче хупса усранă пулнă. Темиçе уйăх каярах вĕсен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англири тусĕсем вĕсем валли Кăнтăр Африкăна кайма визăсем илнĕ. Виши правительствинчен çеç килĕшӳ илмелли юлнă. Анчах Виши правительстви вĕсене ирĕке кăларас вырăнне нимĕçсен аллине панă.

Венгрипе Румыния хирĕçни

СТАМБУЛ, февралĕн 19-мĕш. (ТАСС). Бухарестран çитнĕ сведенисем тăрăх, Венгрипе Румыни хушшинчи лару-тăру татах çивĕчленсе кайнă. Венгри влаçĕсем çак кунсенче Румыни подданăйĕсене Венгрие кĕме виза пама чарнă. Çакна хирĕç ответлесе, Румыни правительстви те венгерсене Румынине кĕме чарса лартнă. Çав сведенисем тăрăхах, Антонеску Гитлертан «Венгрия Румыни çине тапăнса кĕрсе каясран» Румынине гаранти пама ыйтнă. Антонеску çапла кăтартса панă: Румыния Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче хăйĕн войскисен йышне нумайлатма килĕшнĕ, çавăн пирки те Румынин Венгри чиккинчи оборони вăйсăрланса юлнă. Гитлер мĕнле ответ пани паллă мар-ха.

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи вăйĕсен командованийĕ паян кăларнă коммюникере çапла каланă: ĕнер Англин патрулĕсемпе куçакан колоннисем Эль-Тмимирен хĕвелтухăçнелле тата Эль-Тмимипе Эль-Мекили хушшинчи çулран кăнтăралла выртакан районри фронтăн главнăй участокĕнче противникăн колоннисене тĕл пулнă, колоннăсем англичансен чаçĕсене хирĕç хальхинчен вăйлăнрах тăраççĕ. Кăнтăрла иртсен, тăшманăн войскисем Мартубăран Эль-Тмими еннелле чылаях куçнине палăртнă. Çавăн пекех тата фронтăн малти участокĕсенче противник авиацийĕн активлăхĕ те вăйланнă.

Фарадей медальне П. Л. Капица академике пама йышăннă

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Инженер-электриксен институчĕн совечĕ Фарадей медальне совет ученăйне, Сталинла премин лауреатне П. Л. Капица академике пама йышăннă. П. Л. Капица академик хăватлă магнит хирĕсем туса вĕсемпе усă курас тĕлĕшпе наукăра питĕ пысăк çĕнтерӳ тунă.

Çав медале электромашиностроени тĕлĕшпе наукăра питех те паллă çĕнтерӳ тунăшăн е электричество наукинче пысăк çĕнтерӳ тунăшăн параççĕ.

Уругвайра переворот тума хăтланни

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Уругвайра эрреристкен реакциллĕ партийĕ (Эррера сенатор организациленĕскер) тĕнĕл держависен противникĕ пулса тăракан правительствăна сирпĕтсе антарма хăтланнине Уругвай правительстви пусарса лартнă.

Çĕршывра çар çирĕп йĕрке тытса тăрать. Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Уругвай президенчĕ Бальдомир: хĕвеланăç полушарине хӳтĕлес ĕçре Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе пĕрле ĕçлессине хирĕç тăракансене пусарас шутпа татах та хаяртарах мерăсем йышăнма шутлатăп, тесе каланă.

Дорио штаб-квартирĕнче бомба çурăлса кайнă

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 21-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Виширен пĕлтернĕ тăрăх, Марсельте Дорион штаб-квартирĕ йышăнса тăракан çуртăн подвалĕнче бомба çурăлса кайнă.

Японецсем Тимор утравĕн Португали аллинчи пайне оккупациленĕ

ТОКИО, февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Японин правительстви Тимор утравĕн Португали аллинчи пайне оккупацилеме решени йышăннă. Официальнăй йĕркепе, çав решение «Тимор утравĕн Португали аллинчи пайне 1941 çулти декабрĕн 17-мĕшĕнче йышăнса илнĕ Англипе Голланди войскисене хăваласа кăларас» сăлтавпа йышăннă, тесе пĕлтернĕ.

ЖЕНЕВА, февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). Лиссабонран пĕлтернĕ тăрăх, Тимор утравĕн Португали аллинчи пайне Японин войскисем оккупациленĕ пирки Португалин правительстви Токиора демарш тунă. Премьер-министр Салазар çапла çирĕплетсе каланă: Тимор утравĕ çине Португали чаçĕсем пырса çитсенех унтан Англи войскисем пăрахса тухса каясси çинчен январĕн 22-мĕшĕнчех эпĕ гаранти илтĕм, тенĕ. Çавăнпа та Японин войскисен ĕçĕ Португалин суверенăй прависене пăсни пулса тăрать, тенĕ Салазар.

Португалири национальнăй пуху ку тĕлĕшпе резолюци йышăннă. Çав резолюцире национальнăй пуху, Португали нацийĕ ячĕпе, Тимор утравĕн Португали аллинчи пайне Японин войскисем йышăнса илнине хирĕç вăйлăн протест панă. Японецсен çав утăмĕ, тенĕ резолюцире, мирлĕ пĕчĕк государствăна хирĕç агресси тунине пĕлтерет. Национальнăй пуху, Португали территорин суверенитетне тата тĕрĕстĕкĕллĕхне правительство каялла тавăрасси çинчен шантарса каланă.

Чаплă лару

КАНАШ, февралĕн 24-мĕш. (Телефонпа). Февралĕн 23-мĕшĕнче мухтавлă Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа хулари партипе совет тата обществăллă организацисен представителĕсен чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ. Чаплă ларăвăн хисеплĕ президиумне пĕр кăмăллăн ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн составне суйларĕç.

Рабочисемпе хресченсен Хĕрлĕ Çарĕ 24 çул тултарни çинчен тата нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкас задачăсем çинчен ларура Богданов юлташ доклад турĕ.

Лару питех те пысăк çĕкленӳпе Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру ячĕ.

«Канаш районĕнчи ĕççыннисем тăван çĕршыв оборонин фондне 818 пин тенкĕ укçа, 570 пин тенкĕлĕх заем облигацийĕсем, 100-шер тонна тырпул, 10-шар тонна аш-какай пачĕç. Юратнă Хĕрлĕ Çара эпир нимĕç оккупанчĕсене тĕппипех пĕтеричченех пĕрмаях вăйлăн пулăшса тăратпăр»,—тесе çырнă çырура.

Т. ИВАНОВ.

Государствăна тырă сутаççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.) Районри колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă хыççăн хăйсен ытлашши тыррисене государствăна сутаççĕ. Паянхи куна Савадеркино ялсоветĕнчи «Авангард» колхоз коопераци урлă государствăна 3120 килограмм, Вырăс Улхашри «Лесной огонек» колхоз—2.000 килограмм, Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз—1120 килограмм сутрĕç.

Хăйсен ытлашши тырпулне «14 лет Октября», «Борец» колхозсен членĕсем те государствăна сутрĕç.

Районри колхозсемпе колхозниксем, аслă çулпуç Сталин юлташ фронта пулăшассине вăйлатса пыма чĕнсе калани çине ответлесе, çитес вăхăтра государствăна коопераци урлă 120 тонна ытла тырă сутма обязательство илчĕç.

Х. ЛИСИН.

* * *

СĔНТĔР. Оринино ялсоветĕнчи «Красное Сормово» колхозри колхозниксем государствăна тырă сутнипе те Хĕрлĕ Çара куллен пулăшма тăрăшаççĕ. В. Павлов колхозник 62 çулти старик. Унăн виçĕ ывăлĕ фронтра çапăçаççĕ, хăй вăл колхозра хастаррăн ĕçлет. Хĕрлĕ Çара пур майсемпе те пулăшма тăрăшать. Халь вăл хăех государствăна 100 килограмм тырă сутрĕ. Çавăн пекех, Е. Смелов, А. Акраловская, Н. Белкова юлташсем те 100-шер килограмм, Воронов юлташ 120 килограмм сутнă.

Пĕтĕм колхозĕпе пурĕ 120 центнер сутнă.

И. ИВАНОВ.

Вăрçă вăхăтĕнчи налога тӳлеççĕ

ИШЛЕИ. Шурча ялсоветĕнчи ĕççыннисем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе лайăх йĕркеленине пула колхозниксен Хĕрлĕ Çара пулăшас кăмăлĕ ӳссех пырать. Халĕ вĕсем, фронта татах вăйлăнрах пулăшса пырас тесе, вăрçă вăхăтĕнчи налога срокчен тӳлеме тытăнчĕç.

«Самолет» колхоз членĕсем Кириллов—300 тенкĕ, Трофимова — 350 тенкĕ, «Новое Акрамово» колхоз членĕсем Тимофеева, Пискарев юлташсем—175-шер тенкĕ тӳлерĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи налога срокченех тӳлесси колхозниксем хушшинче ӳссех пырать.

Н. СУВОРОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Виши правительстви нимĕçсем валли Ливие материалсем янине йышăннă

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 22-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви корреспонденчĕ Лондонран пĕлтернĕ тăрăх, Виши правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене [illegible] Францирен Тунис урлă Ливие [illegible] Анчах [illegible] Пĕрлешӳллĕ Штатсене тумал.

Германия инфляци хăрушлăхĕ умĕнче

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 23-мĕш. (ТАСС). Германи умĕнче инфляци [illegible] «Франкфуртер цейтунг» [illegible] тăрăх, Совет Союзне хирĕç вăрçă пуçланнăранпа Германи [illegible] 22 миллиард марка тăран [illegible]

Чувашская контора «Главкинопрокат» получила и ВЫПУСКАЕТ на экраны республики НОВЫЙ ЗВУКОВОЙ ДОКУМЕНТАЛЬНЫЙ ФИЛЬМ

План и монтаж фильма режиссеров: орденоносца Л. ВАРЛАМОВА, лауреата Сталинской премии И. КОПАЛИНА.
Снимали операторы: И. БЕЛЯКОВ, Т. БОБРОВ, Т. БУНИМОВИЧ, П. КАСАТКИН, Р. КАРМЕН, А. КРЫЛОВ, Л. ЛЕБЕДЕВ, Б. НЕБЫЛИЦКИЙ, Б. МАКАСЕЕВ, М. ШНЕЙДЕРОВ, В. ШТАТЛАНД, А. ЩЕКУТЬЕВ, А. ЭЛЬБЕРТ, В. СОЛОВЬЕВ, С. ШЕР.
Производство Центральной студии КИНОХРОНИКИ.

Коллектив работников Наркомата социального обеспечения Чувашской АССР извещает о преждевременной смерти сотрудника Наркомата
ЗДОРНОВА
Александра Федоровича
и выражает соболезнование семье покойного.

ЧЕБОКСАРСКОМУ ЛИКЕРО-ВОДОЧНОМУ ЗАВОДУ
требуются
на постоянную работу: опытный тракторист, механик по двигателю внутреннего сгорания, бондари, возчики, кочегары, чернорабочие, работницы.
Оплата сдельная.
С предложениями обращаться: Чебоксарский ликеро-водочный завод, ул. Чувашская, № 65, к главному инженеру.
5—3

Горуправление Чувашской Конторы Госбанка просит все организации и предприятия г. Чебоксар представить КАССОВЫЙ ПЛАН НА 1 кв. с. г. не ПОЗДНЕЕ 2-го МАРТА 1942. г.
Горуправление.

Канаш хулинче хваттерте тăнă чухне КĔСРЕ тухса тарнă: тĕсĕ турă, кайри сулахай ури çинче кăшт шурă пур, çамки çинче те шурă пур, 16 çулта, çӳллĕшĕ 134 см. Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чăваш АССР, Калинин районĕ, Айкăш ялĕ, Киров ячĕпе тăракан колхоз правленине.

ТРЕБУЮТСЯ
ДЛЯ РАБОТЫ В ЧЕБОКСАРАХ:
секретарь-машинистка, плотники, столяры, маляры, штукатуры, каменщики, бетонщики, печники, арматурщики, кровельщики, землекопы, кузнецы, шофера, подсобные рабочие, сторожа, курьеры.
Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, улица К. Маркса, дом № 80, контрольная будка, с 2 час. дня до 7 час вечера.
3—1 Администрация.

Из Чебоксарского винзавода с привязи сбежала ЛОШАДЬ, по кличке „Броневик", гнедой масти, грива на обе стороны, под седелкой белые пятнышки. Лошадь была с хомутом и седелкой. Знающих просим сообщить по адресу: Марпосадский район, Чувашской АССР, Алмандаевский сельсовет, правлению Синьял-Ирх-Сирмикского колхоза им. Сталина.

Военторгу требуются агрономы на руководящую работу в отделении и подсобных хозяйствах, также свинари и свинарки.
Обращаться—г. Чебоксары, ул. Ленина, 2, к т. ШЕЙНО.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата ноимсем пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 655 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6, 58 64 п. л.